ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

4 (4418) №, 2015, февраль /нарăс/, 5
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ



## Пирĕн телейшĕн тăрăшакансем – педагогсем

***Шупашкарти 40-мĕш шкулăн 5-мĕш кадет класĕнче вĕренекен Диана Мадерова, Виктория Павленко тата Даша Кудякова – вĕренӳ отличникĕсем. Пур çĕрте те хастарлăхĕпе палăраканскерсене пĕрле вĕренекенсемпе педагогсем те хисеплеççĕ.***

– Шкулта чуна савăнтараканни нумай çав. Учитель урок ыйтнине каласа пани, «пиллĕк» е «тăваттă» паллă илни те чун уявĕ мар-и? Эпир пур предметпа та аван вĕренетпĕр, çавăнпа учителĕн кашни сăмахне ăша хыватпăр. Çитменнине эпир кадет класĕнче. Пирĕн тĕп тĕллев – çĕршыва юрăхлă çын пуласси, йывăр вăхăтра тус-юлташа пулăшасси, атте-аннешĕн яланлăхах тĕрев пуласси, – терĕ Даша Кудякова хастаррăн.

– Эпир туслă. Пӳлĕме класс ертӳçи яланах йăл кулăпа кĕрет. Кун пек чухне туслăх тата та çирĕпрех пулнăн туйăнать. Пирĕншĕн пин-пин утăм тума хавхалантараканĕ те педагогах. Пирĕн телейшĕн тăрăшаканĕ те вĕрентекенех. Ытти учительсем те лайăх пĕлӳ панисĕр пуçне чĕресене илем кӳме, ырă кăмăл парнелеме пултараççĕ. Кулă – çыннăн чи хаклă парни. Йăл кулсан, пĕр-пĕрне ытларах ĕненетĕн, шанатăн. Юрăри пек каласан, туслăх йăл кулăран пуçланать те, – калаçăва кăмăлтан хутшăнать мал ĕмĕтлĕ Виктория Павленко.

– Çĕр çинче тĕрлĕ професси пур. Вĕсенчен хăвна килĕшеккеннине тупма çăмăлах. Лайăх вĕренсе çеç пымалла. Мана мĕн пĕчĕкренех çар тумĕ питĕ килĕшетчĕ. Салтакран таврăннă пиччесем урампа утнине ăмсанса пăхаттăм. Акă халĕ хам та кадет. Вĕренме питĕ килĕшет. Шкулта Тăван çĕршыв ывăлĕсене халалланă музей пур пирĕн. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи паттăрсен тумтирĕсем, çавăн пекех çырăвĕсемпе сăнӳкерчĕкĕсем те вырăн тупнă унта. Экскурсие пырса куракан хастар салтак шăписемпе паллашма та, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки вуласа пĕлме те пултарать. Тепĕр чух ветерансем те тĕлпулăва çитеççĕ. Вĕсем иртнине, вăрçă вăхăтне аса илнĕ самантра чун хĕсĕнсе ыратать. Тем те курнă, тем те тӳснĕ-çке паттăрсем! Çав вăхăтра вара хăвăртрах ӳссе пысăк çын пулас кăмăл çуралать. Пирĕн те хăвăртрах кама та пулин ырă ĕç туса пулăшас килет, – тет Диана Мадерова.

Эрнере çичĕ кун. Çичĕ тăванах ĕнтĕ. Тунтикун, ытларикун, юнкун... Çĕр тĕттĕмĕ сирĕлет те, çутă кун пуçланать. Ĕнер те, виçĕмкун та, паян та çаплах... Кашни килен кун кашни çынна мĕн те пулин ырри парнелет. Çапла сисĕнмесĕр кунсем, çулсем иртĕç те паянхи кадетсем çĕршыва юрăхлă çынсем пулса тăрĕç.

***Элиза ВАЛАНС.***

Шупашкар.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

***Тусăмсем! Аçăр-аннĕр, аслаçăр, кукамăйăр, ыттисем хăйсене килĕшекен хаçат-журнала çырăннă чухне, эсир те «Тантăш», «Тетте», «Самант» кăларăмсене паянах (йӳнĕ хакпа) çырăнса пама ыйтăр. Вĕсем хирĕçлемеççех!***

## Йӳнĕлле çырăнма васкăр!

**Хаçат-журнала 2015 çулăн иккĕмĕш çурринче илсе тăмашкăн *февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 31-мĕшĕччен* иртнĕ çур çулти хаксемпе çырăнтару иртет. Çак тапхăрта "Хыпар" Издательство çурчĕн пур кăларăмне те йӳнĕрех хакпа çырăнма пулать.**

| Кăларăмсем | Индекс | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | 54800 | 737,70 | 288 | 279 | 144 |
| * Хыпар-эрнекун | 78353 | 321,96 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 375,96 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 340,44 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 215,4 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 192,66 | 114 | 111 | 81 |
| ** Хресчен сасси | 54838 | 280,92 | 168 | 162 | 114 |
| Тăван Атăл | 11529 | 319,08 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | 24608 | 161,52 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК | 83429 | 140,36 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 310,92 | 192 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства ЧР | 54847 | 743,58 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 256,92 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 181,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 143,52 | 114 | 111 | 90 |

**Июлĕн 1-мĕшĕнчен "Хыпар-шăматкун" хаçат "Хыпар-эрнекун" ятпа тухма пуçлать.*

*** "Хресчен сасси - Кил" иккĕмĕш çур çулта уйрăммăн пичетленмест. Малашне "Хресчен сасси" хаçат эрнере пĕр хутчен 8 страницăпа вулакан патне çитĕ.*

# Тĕрлĕрен: вула та пĕл

ТАНТĂШСЕМ

## «Хамшăн мар, юлташшăн тăрăшасчĕ»



**«Туслăх ăшăтать, йывăрлăхра пулăшать», – çапла шухăшлаççĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси шкулĕнче тăваттăмĕш класра вĕренекен Светăпа Инесса Кузнецовăсем, Валерия Дмитриева тата Снежана Васильева. Хĕрачасем пĕр-пĕриншĕн тăван пекех хаклă. Çак туслăх вĕсене вĕренўре те, пултарулăхра та çитĕнў тума хавхалантарать.**

Инесса кĕнеке вулама юратнăран хăш чухне хăй те пĕчĕк калавсем çырать, аппăшĕнчен тĕслĕх илет-çке вăл. Светăпа Валерия та çак киленĕçпе «чирлеççĕ», Надежда Сергеевна вĕрентекен калав çырма хушсанах шухăш вĕçевне ирĕке яраççĕ те ĕçе пуçăнаççĕ. Снежана та сочиненисенче шухăшне ытарлăн çавăрса калама пĕлет.

Мĕншĕн пурин те çак туртăм палăрать тетĕр-и? Кунта çырас пултарулăха аталантарма «Шевле» хаçат кăлараççĕ. Çак ырă йăлана 2008 çулта пуçласа янă. Ертўçи – Надежда Сергеевна Максимова вĕрентекен. Кашни пилĕк çултанах хаçат уявне ирттереççĕ, хастар авторсене Хисеп çучĕпе чыслаççĕ.

Хĕрачасем ытти енĕпе те пултаруллă. Валерия архитектор пулма ĕмĕтленет. Хăçан та пулин вăл хатĕрленĕ планпа чаплă çуртсем ăсталама пулĕ-çке. Сăмах май, хĕрача ўкерме юратать: çынсене тата чĕрчунсене çав тери илемлĕ сăнласа парать. Амăшĕнчен алĕçне вĕренекенскер çыхма тата тĕрлеме те кăмăллать.

Света хĕллехи çанталăка питĕ килĕштерет. Мĕншĕн тесен ку вăхăтра йĕлтĕрпе чупма пулать-çке. Эх, шурă юр çинче ярăнса пынă май мĕн тери хавхаланать хĕрача! Лерăпа иккĕшĕ час-часах пĕрле калав шăрçалаççĕ, кун пек кăсăклăрах та.

Снежана çинчен калас пулсан тусĕсем ырă сăмах шеллемеççĕ.

– Вăл питĕ тăрăшуллă та сăпайлă хĕрача, никампа та вăрçăнмасть, хăйне лайăх тытать. Пире кам та пулин кўрентересшĕн пулсан хўтĕлет, – теççĕ тантăшсем.

Инесса вара хăйĕн сăввисене пухса блокнотран пĕчĕк кĕнеке хатĕрленĕ. Чун-чĕререн шăранса тухакан хайлавĕсене вăл çемйине, юлташĕсене тата чĕрчунсене халаллать. Тус-тантăшран та пуян, пуринпе те пĕр чĕлхе тупĕ.

– Пĕр-пĕрне пулăшмалла. Хамăршăн мар, юлташшăн ытларах тăрăшмалла, – тет Инесса.

Çак сăмахсене пăхăнсан çĕр çинче пурте телейлĕ пулĕç.

*Лариса ПЕТРОВА.*

**АВТОР сăнўкерчĕкĕ.**

## Пултарулăха кулленех аталантармалла

**Унăн сасси шăнкăрав пек янăравлă та уçă. Çавăнпах пуль вăл ача садне çўренĕ чухнех юрлама вĕреннĕ. Хăйĕн пултарулăхĕпе пурне те тĕлĕнтернĕ. Шкула каймалла пуçласан талантне малалла аталантарнă.**

Халĕ Диана Майорова тăххăрмĕш класра вĕренет. Миçе концерта, уява, мероприятие хутшăнман-ши вăл çак тăхăр çул хушшинче? Шутласа та пĕтереймĕн. Пике юрă-кĕвĕ тĕнчине ачаранах илĕнниччен ним тĕлĕнмелли те çук. Ара, унăн ашшĕ-амăшĕ те, пиччĕшĕ те юрраталла ăста. Ашшĕ, Николай Васильевич ялти Культура çуртĕнче ĕçлет. Унти юрă-ташă коллективĕ, çав шутра Дианăн çемйи те тăтăшах концертсемпе таврари ялсене тухса çўрет. Чăн-чăн юрă-кĕвĕ çемйинче çитĕнет хĕрача!



Вăл чăваш юррисене те, вырăслисене те килĕштерет. Тунсăхлисене те, хаваслисене те кăмăллать. «Мĕнле юрă шăрантарас килни кăмăл-туйăмран килет, – тет Диана. – Пусăрăнчăк кăмăлпа, сăмахран, тунсăхлă юрăсене çеç юрлас килет. Хăш чухне вара тунсăха сирсе ярас тесе пачах тепĕр майлă, хаваслă юрăсене юрлатăп».

Динăн чун киленĕçĕ пĕрре çеç мар иккен, темиçе. Юрланисĕр пуçне вăл ўкерме кăмăллать. Пушă вăхăтра та кăранташпа альбом илсе шухăша путать. Куçа илĕртекен çутçанталăк илемне е пуçра çуралнă пĕр-пĕр сăнара хут çине куçарать. Ун пек чух вăл хăйне лăпкăн туять. Чи çывăх çыннин, амăшĕн, портретне те ўкернĕ Диана. Ăна вара унăн çуралнă кунĕ чне парнелесе савăнтарнă.

Аслăрах классене çитсен сăвă-калав çырма пуçланă вăл. Ку ĕç те унăн кăмăлне каять. «Тантăш» хаçатра та пичетленнĕ Дианăн хайлавĕсем. Вăл мĕн пĕчĕкренех хăйĕн юратнă кăларăмĕпе çыхăну тытать-çке! Пултарулăхне кулленех аталантарать. Тăрăшни сая каймасть, паллах. Диана «Юратнă лаша Çăлтăр» калавĕпе Чăваш халăх сайчĕ ирттерекен «Урхамахсем тăраç тапăртатса...» литература конкурсĕнче те мала тухнă.

Пултарулăх конкурсĕсенче çеç мар, спорт ăмăртăвĕсенче те хастар вăл. Ытларах йĕлтĕрпе чупма кăмăллать. Хĕллехи кунсенче тăтăшах урине йĕлтĕр сырса урама тухать. Çак спорт тĕсĕпе тупăшакансен хушшинче те вăл маттуррисен йышĕнче.

Вулакансене те Диана спортпа ачаранах туслашма, тавракурăма анлăлатма, кĕнеке нумай вулама сунать.

*Нина ЦАРЫГИНА.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Штанаш шкулĕ.

**Илья КЛОЧКОВ сăнўкерчĕкĕ.**

## Кĕнеке – çывăх тус

Ял çыннисемпе пĕрлех ачасене кĕнеке вулама явăçтарассипе библиотекарьсем сахал мар ĕçлеççĕ. Çак тĕллевпе вулавăшсенче тĕрлĕ акци, конкурс ирттереççĕ. Акă Элĕкри ача-пăча библиотеки те кĕçĕн тата аслă классенче вĕренекенсем валли нумай мероприяти йĕркелет.

Библиотека заведующийĕ Галина Миронова каланă тăрăх, тĕрлĕ мероприяти йĕркелени ачан тавракурăмне ўстерме пулăшать. Паллах, пĕр-пĕр конкурса, викторинăна хатĕрленнĕ май алла кĕнеке тытма тивет. «Вуласа йăлăхрăмăр, кунта текех килместпĕр», – тенине илтмен кунта çўрекенсенчен», – сăмах хушать Г.Миронова. Сăлтавĕ те пур. Библиотека ĕçченĕсем кашнин ырă енĕсене тупса палăртма пултараççĕ. Акă, кĕçĕн классенче вĕренекенсем халăх юмахĕсене вулама кăмăллаççĕ. Аслăрах çулсенчисем вара чăваш, вырăс, тĕнче литературин классикĕсен произведенийĕсене тишкереççĕ. Библиотека ĕçченĕсем ачасене чун çимĕçĕпе тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Вулавăш фончĕ те çулсерен пуянланса пырать. Иртнĕ çул кăна ача-пăча библиотекине икçĕр яхăн çĕнĕ кĕнеке килнĕ.

– Чăвашла та, вырăсла тухнисем те пур. Çавăнпа та ачасен кăмăлне тивĕçтерме пултаратпăр пулĕ тесе шухăшлатпăр, – пĕлтерет Галина Миронова заведующи.

Иртнĕ çул ача-пăча библиотекине кунсерен вăтамран тăхăрвунпилĕк ача çўренĕ. Вĕсене тĕрлĕ темăпа çыхăннă литературăпа тивĕçтернĕ. Çулла та, хĕлле те ачасем библиотекăран татăлман. Кунти ĕçченсем кĕнекесемшĕн хыпса çунакансемшĕн кану кунĕсем çуккине аван ăнланаççĕ. Паллă çыравçăсен произведенийĕсемпе литература сехечĕсем ирттересси, кĕнеке авторĕсемпе тĕлпуласси те йăлара. Çамрăксен тата ача-пăча кĕнекин эрнинче чи лайăх, нумай вулакансене чысласси те яланах çўллĕ шайра пулса иртет.

Библиотекарьсем «Çемье тата кĕнеке» программа туса хатĕрленĕ. Çавна май кунта ашшĕ-амăшĕн кунĕсем те ирттереççĕ.

Элĕкри ача-пăча библиотеки тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнса илет. Ан ўркен – вула кăна. Кунта вăхăт яланах усăллă та интереслĕ иртет.

*Юрий КОРНИЛОВ.*

Элĕк районĕ.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1810 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 372
Пичете февраль уйăхĕн 4-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Ачасен ӳкерчĕкĕсем – маркăсемпе конвертсенче






⊚ Даша МАКАРОВА ӳкерчĕкĕ.



⊚ Наталия АНТОНОВА ӳкерчĕкĕ.

⊚ Мария ФОМИНА ӳкерчĕкĕ.

Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа кăçал 70 çул çитет. Çак чаплă уява хатĕрленнĕ май Раççей Почтипе «Марка» издательство центрĕ пултарулăх конкурсĕ йĕркелерĕç. Унта кăмăл пуррисем кашни хутшăнма пултарнă. Çĕнтерĕве халалланă почта маркисемпе конверчĕсен вариантĕсем валли ĕçсем тăратас тĕлĕшпе уйрăмах ачасем хастар пулни палăрнă. Çакна анчахрах пирĕн республикăра вĕçленнĕ конкурс тапхăрĕ те çирĕплетрĕ.

Çĕрпӳ хулинчи «Юмах» 6-мĕш ача садне çӳрекен пепкесем – конкурса чи хастар хутшăнакансем.

«Çакăн пек конкурссем йĕркелени иртнĕ вăрçăн хăрушлăхне тепĕр хутчен аса илтерет. Пирĕн халăх тӳснĕ, Тăван çĕршыва юратса, Çĕнтерĕве шанса ирсĕр тăшманпа кĕрешнĕ. Ачасен ӳкерчĕкĕсем Аслă Çĕнтерĕве ĕмĕр-ĕмĕр асра тытни, çамрăк ăру вăрçă паттăрĕсене пĕлни, вĕсене хаклани çинчен калать те ĕнтĕ, – тет Федераци почта çыхăнăвĕн Чăваш Республикинчи управлени директорĕ Владимир Тимофеев. – Çак ӳкерчĕксем тата вĕсем çинче никĕслесе хатĕрленĕ почта маркисем пирĕн халăх фашизма хирĕç паттăррăн кĕрешнине тата Аслă Çĕнтерĕве çывхартас тĕлĕшпе пурнăçа шеллемесĕр кĕрешни çинчен пĕтĕм тĕнчене калĕç те».

Конкурс финалне Мария ФОМИНА (Шупашкарти ача-пăча ӳнер искусствисен шкулĕ), Наталия АНТОНОВАПА Ирина АНИКИНА (Шупашкарти Акцыновсен ячĕллĕ 6-мĕш ӳнер шкулĕ), Катя МАРКОВА (Шупашкарти искусствăсен 1-мĕш шкулĕ), Дарья МАКАРОВА (Çĕрпӳ) ĕçĕсене суйласа илнĕ. Вĕсен пултарулăхне Мускаври сумлă комисси членĕсем хаклĕç.

Конкурса пилĕк çулти ачасенчен пуçласа профессионал художниксем те хутшăнаççĕ. Паян та çĕр-çĕр ӳкерчĕкпе çырусем килеççĕ. Конкурс çĕнтерӳçин ĕçĕнчен хатĕрленĕ маркăллă продукцие Аслă Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне кăларма палăртнă.

Мала тухнисене Çĕнтерӳ кунĕччен палăртĕç. Раççей Почти йĕркеленĕ «Çырăвăн чи лайăх урокĕ» тепĕр конкурса хутшăнакансен ĕçĕсемпе ача-пăча кĕнекине илемлетнĕ çĕрте усă курĕç. «Ветеран патне çырнă çыру», «Пĕрремĕш суворовецсем патне янă çыру», «Пур çавăн пек професси – Тăван çĕршыва хӳтĕлесси» – кăçалхи тĕп темăсем.

***Владимир ЛЕОНИДОВ.***

**САНӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** конкурса килнĕ ĕçсем.




## Манăн тусăм пултаруллă та ĕçчен



Эпĕ пиллĕкмĕш класра вĕренетĕп. Манпа пĕрле питĕ хитре, ĕçчен те пултаруллă Женя ятлă хĕрача ăс пухать. Эпĕ Çатра Маркара, вăл Малтикас ялĕнче пурăнатпăр пулин те Женя – манăн чи çывăх юлташ. Кăçал вăл «Тăван Ен» район хаçачĕ иртterекен «Шкул корреспонденчĕ» конкурса хутшăнса ман пекех (эпĕ пĕлтĕр) 3-мĕш вырăн йышăнчĕ. Эпĕ уншăн питĕ хĕпĕртерĕм. Пирĕн иксĕмĕрĕн малашне те район хаçачĕпе тачă çыхăну тытас кăмăл пур. Çавăн пекех эпир «Тантăш» хаçатпа та тахçанах туслă. Вăл иртterекен тĕрлĕ конкурса хутшăнатпăр.

Женьăн Анжела ятлă йăмăкĕ пур. Вăл та аппăшĕ пекех шкулта аван ĕлкĕрсе пырать. Аппăшĕ уншăн, чăнах та, тĕслĕх вырăнĕнче.

***Екатерина ПЕТРОВА.***

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.

## Мĕн-ши вăл Тăван çĕршыв?



Пирĕн шкулта 3 «а» класра «Манăн тăван çĕршыв Раççей» класс сехечĕ иртрĕ. Чи малтанах ачасене Г.Стратилатова вĕрентекен «Мĕнрен пуçланать Тăван çĕршыв?» юрă итлеттерчĕ. Вăл вĕренекенсенче темĕн тĕрлĕ ыйту çуратрĕ. Чăнах та, мĕнрен пуçланать-ши Тăван çĕршыв? Вун-вун хурав тупăнчĕ вĕсен. Кашниех хăйĕн хуравне тĕплĕн ăнлантарса пама тăрăшрĕ. Çак темăпа çыхăннă ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене те нумай аса илчĕç маттурскерсем. Кашнишĕн «Тăван çĕршыв – анне пекех» тени тĕпре пулчĕ. Галина Александровна пирĕн мăнаçлă çĕршыв пирки тĕплĕн каласа ăнлантарчĕ, тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ. Уйрăмах вĕренекенсене «Ӳссен эсир Тăван çĕршывшăн мĕн тунă пулăттăр?» ятпа йĕркеленĕ вăйă килĕшрĕ. Кунта ачасем малтанах хутран касса хатĕрленĕ салтак тӳми чечекĕн çеçкисем çине хăйсен шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене çырчĕç. Вĕсенчен «чечек» йĕркелесе урайне сарчĕç, унтан варрине хăйсем вырнаçса юрăсем шăрантарчĕç. Класс сехетне презентаципе усă курса ирттерчĕç. Вĕрентекен çулçăсем çине çырнă ачасен ĕмĕчĕсене пуçтарчĕ. Кайран, тепĕр вунă-вунпилĕк çултан, вĕсемпе хăйсене тепĕр хут паллаштарма тĕв турĕ.

***Александр МИХАЙЛОВ.***

Шăмăршă районĕ,
Палтиел.

## ĂШĂ САЛАМСЕМ








Комсомольски районĕнчи Анат Тимĕрчкасси шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекен **Кристина ЕГОРОВĂНА** çуралнă кун ячĕпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, пысăк телей пур çĕрте те ăнăçу сунатпăр.

***Пĕрле вĕренекенсем.***

✧ ✧ ✧

Юратнăран та юратнă кукамая, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чурпай ялĕнче пурăнакан **Кликерия Андреевна ТИМОФЕЕВĂНА,** çуралнă кунĕ ячĕпе чун-чĕререн шăранса тухакан чи çепĕç те ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми вăй-хал, тулăх пурнăç сунатпăр. Ăнăçупа телей пур çĕрте те юнашар çӳреччĕр, пит-куçра яланах илемлĕх хуçалантăр, кулленех савăк кăмăл хавхалантартăр.

Саншăн çуталтăр илемлĕ çут çăлтăр,
Саншăн çĕклентĕр илемлĕ хĕвел,
Савăк сар кайăк çĕн юрă пуçлатăр,
Пултăр илемлĕ, телейлĕ кун-çул!

***Салампа мăшăрĕ, ачисем, вунă мăнукĕ.***

✧ ✧ ✧

Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç шкулĕнче вĕренекен **Аня ЛУБАШКИНĂНА** çуралнă кун ячĕпе саламлатпăр. Çынна сунакан ырлăху хăвăн патна пин хут пысăкрах таврăнтăрччĕ. Телейлĕ пул, çутă кунăн кашни саманчĕпе савăн!

***Тус-тантăшĕсем.***

✧ ✧ ✧

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Çĕн Атикасси шкулĕнчи вырăс чĕлхипе литератури вĕрентекенне, класс ертӳçине, **Ираида Леонидовна ЕВСЕЕВĂНА,** çуралнă кун ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Сирĕн урокăрсем пурнăçра яланах кирлĕ. Тавтапуç Сире пире пурнăçа хаклама, юратма, тĕрĕс çул суйлама вĕрентнĕшĕн. Эсир савăнсан эпир те телейлĕ. Сывлăхăра упрăр. Шăпан ырă кĕтменлĕхĕсем хавхалантарсах тăччăр.

***Салампа сирĕн 8-мĕш класс тата 2008 çулта вĕренсе тухнисем.***

ФАНТАСТИКА ЮМАХӖСЕМ

# Тӗлӗнтермӗш чӗрчун пулӑшӑвӗ



Çуллахи пӗр илемлӗ кун аннепе вӑрмана çырла татма кайрӑмӑр. Çырла вӑл çулхине питех те ӑнса пулнӑччӗ, ял халӑхӗ вӑрмантан тухма та пӗлместчӗ, хӗлле валли витамин пухать, сутса кӑштах укçа тума та пулать. Эпир те аннепе пӗр хутчен кайса килнипех çырлахмарӑмӑр, аппана татса килнӗ çырларан варени пӗçерме хушрӑмӑр та кӑштах канса илнӗ хыççӑн каçа хирӗçех татах та тепре каяс терӗмӗр: çырлан хӑйӗн вӑхӑчӗ, ырана юлсан вӑл ытларах пиççе юрӑхсӑра тухма та пултарать.

Иксӗмӗр те васкаса çырла пухма пуçларӑмӑр. Темле пулчӗ, хам та ӑнланаймарӑм, карçинкка тулсан çаврӑнса пӑхрӑм та анне ниçта та курӑнмасть. Юнашарахчӗ-çке. Хытах хӑраса кайрӑм. Унтан аннене шырама пуçларӑм. Кӑшкӑртӑм-кӑшкӑртӑм, вӑл сас памарӗ. Малалла утрӑм, татах кӑшкӑратӑп, анчах пӗр сас-чӳ те илтӗнмест!

Утсан-утсан темӗнле кӳлӗ патне çитсе тӑтӑм. Кун пеккине эпӗ нихӑçан та курман. Никам та курман пулӗ. Ун пирки эпӗ нумай илтнӗччӗ. Çынсем каланӑ тӑрӑх çак кӳлӗре тӗлӗнтермӗш чӗрчун пурӑннӑ тет, вӗсем ӑна тӗп тӑвасшӑн пулнӑ, анчах та вӑл кӳлӗре уйӑхра пӗр хутчен çеç курӑннӑ тет, çынсене асӑрхасан тӳрех шыв айне тарнӑ тет, çавӑнпа та никам та ӑна тытайман.

Каç та пула пуçларӗ, хӗвел вӑрман хыçне пытанса, тулли уйӑх тӳпене хӑпара пуçларӗ. Эпӗ вара аннене шыраса тупаймарӑм. Кӳлӗ çывӑхнерех пытӑм та шыв айӗнчен темӗнле чӗрчун мана хирӗç пӑхнине куртӑм: упа теме, упа мар, шапа теме, шапа мар, кӑвак тумлӑ, кӑвак куçлӑ. Унтан вӑл шыв çине ишсе тухрӗ, ӑшӑ куçӗсемпе ман çинелле пӑхать. Çурçӗр çитнӗ пулсан та темшӗн пӗртте хӑрамарӑм, ӑна тытас тесе алла тӑсрӑм, вӑл хӑраса каялла чакрӗ, анчах та темшӗн шухӑшне улӑштарчӗ, ман пата тепӗр хутчен çывхарчӗ те этем чӗлхипе калаçма пуçларӗ. Малтанах тӗлӗнтӗм-ха, унтан ку пӗтӗмпех тӗлӗкре пулӗ терӗм, ӑна вӑрманта çухалса кайни çинчен каласа патӑм.

– Эпӗ сана пулӑшма хатӗр, анчах та эсӗ те мана пулӑш, – терӗ тӗлӗнтермӗш чӗрчун.

– Вӑй çитнӗ таран пулӑшӑп, – килӗшрӗм эпӗ.

Вӑл мана хӑйӗн инкекӗ çинчен каласа пачӗ. Пӗр тулли уйӑхлӑ каç вӑл хӑйӗн çемйипе кӳлӗрен тинӗсе тухса каясшӑн пулнӑ. Арӑмӗпе ачисем шывран ӑнӑçлах тухса тинӗселле кайнӑ, вӑл вара урине хытӑ ыраттарнӑ та çакӑнтах тӑрса юлнӑ.

– Нумай вӑхӑт асапланса пурӑнтӑм, ура тӳрленме те шутламасть, – тет вӑл ассӑн сывласа.

Чӗрчун ури çине уйӑх çутипе пӑхрӑм та пӳрнинче пӗчӗк шӑрпӑк куртӑм, пӗчӗк пулин те еплерех хытӑ чӑрмантарнӑ вӑл ӑна! Шӑрпӑка асӑрханса туртса кӑлартӑм та хайхи чӗрчунӑн куçӗсем те, хӑй те çуталчӗ, ман умра тӗксӗм кӑвак тумлӑ тӗлӗнтермӗш мар, çутӑ тум тӑхӑнни тӑрать.

– Эсӗ мана пулӑшрӑн, эпӗ те сана пулӑшатӑп, – тесе чӗрчун мана хӑйӗн мӑйӗ çине лартрӗ те эпир аннене шырама пуçларӑмӑр. Вӑрман тӑрӑх нумаях та утмарӑмӑр, çырла пуçтарнӑ уçланкӑ патне çитсе тухрӑмӑр. Анне кунтах-çке! Вӑл эпӗ çухалнине сисмен те иккен. Çумӗнче хӗрӗ çуккине курнӑ-ха, юнашарах пулӗ тенӗ.

Тӗлӗнтермӗш чӗрчун анне куçӗ умне курӑнас темерӗ, манпа васкаса сывпуллашрӗ:

– Халӗ эпӗ те çемье патне каятӑп, сывӑ пул, – тесе тинӗселле çил пек вӗçсе çухалчӗ.

Эпӗ аннене тӗлӗнтермӗш чӗрчунпа тӗлпулнине каласа памарӑм, ӑна мӗн пустуй кулянтарас. Пураксене йӑтрӑмӑр та кӗтӳ киличчен киле ӗлкӗрес тесе ялалла васкарӑмӑр.

Татнӑ çырларан тутлӑ варени пӗçертӗмӗр. Хамӑра валли те çитет, хӑнасене сӑйламалӑх та пур.

*Надежда УСТИНОВА.*
Хӗрлӗ Чутай районӗ,
Штанаш шкулӗ.

# Хӑюллӑ Марине

Пурӑннӑ тет пӗр хӗрача. Вӑл Марине ятлӑ пулнӑ. Асламӑшӗ каланӑ тӑрӑх унӑн амӑшӗ Марине çуралсанах çут тӗнчерен уйӑрӑлнӑ. Ӑна асламӑшӗ пӑхса ӳстерет. Çулсем иртеççӗ, хӗрача та вунпилӗк çула çитрӗ. Çак уяв ячӗпе тусӗсене чӗнчӗ, пурте пӗрле Марине пӗçернӗ тутлӑ кукӑль-икерчӗпе хӑналанчӗç, юрларӗç-савӑнчӗç.

Тусӗсем салансан Марине çывӑрма выртма хатӗрленчӗ. Ун çумне асламӑшӗ пырса ларчӗ те хӗрачана куçран пӑхрӗ:

– Марине, эсӗ халӗ пӗчӗк мар, вун пилӗк çул тултартӑн. Манӑн сана чӑннине каласа парас килет, – терӗ.

Хӗрачан амӑшӗ сывах иккен, анчах та асламӑшӗ мӑнукне çухатасран шикленнипе ӑна чӑннине каласа пама хӑранӑ.

– Мӗн пулнӑ вара манӑн аннепе? – тӗлӗнсе ыйтрӗ Марине.

– Пӗр каçхине эпир аннӳпе çенӗкре çӑлтӑрсем çине пӑхса выртаттӑмӑр. Вӑл каç çӑлтӑрсем уйрӑмах вӑйлӑ çутататчӗç, уйӑх та тулличчӗ. Ӑнсӑртран пирӗн кил хушшинче ларакан çӑлран темӗн сиксе тухрӗ. Хӑй çын пекех, анчах та мӑйракаллӑ тата хӳреллӗ.

– Шуйттан! – хӑрасах ӳкрӗмӗр эпир.

– Усал аннӳне хӑйпе пӗрле илсе кайма килнӗ иккен, вӗсен патши ӑна курнӑ та юратса пӑрахнӑ имӗш. Аннӳ: «Пымастӑп!» – тет. Анчах та лешӗ пирӗн çемьене хур тӑвассипе хӑратать. Çав вӑхӑтра эсӗ пӳртре тутлӑ тӗлӗксем курса çывӑраттӑнччӗ. Вара аннӳ шуйттана: «Эпӗ ыран пырӑп, унччен манӑн кӑштах чиперленмелле, патша умӗнче хитрен курӑнмалла», – тесе суйрӗ.

Шуйттан тепӗр кун килме шантарса тарса çухалчӗ: «Сана ыран илсе каятӑпах!» – тет хӑй йӗкӗлтешсе.

Аннӳ кунӗпех куççуль тӑкрӗ. Енчен те шуйттан тепре килсе ӑна илсе каятех пулсан вӑл сана та хӑйӗнпе пӗрлех илесшӗнччӗ, эсӗ кӑкӑр ачи кӑначчӗ-çке!



Эпӗ ӑна лӑплантарма тӑрӑшрӑм: «Шуйттана сенӗкпе чиксе тӗп тӑватӑп!» – терӗм. Аннӳ кӑштах лӑпланчӗ.

Каç пулчӗ. Эпӗ сенӗкпе пытанса лартӑм. Аннӳ ӗнерхи вырӑнта усал килессе кӗтсе тӑчӗ. Çӑлтӑрсем пӗлӗт çине тухсан çӑлтан каллех шуйттан сиксе тухрӗ. Эпӗ ӑна çурӑмӗнчен сенӗкпе чикрӗм, анчах та ӑна нимӗн те пулмарӗ, вӑл аннӳне çаврӑнса тытрӗ те çӑла сикрӗ. Питӗ хытӑ макӑртӑм, анчах та нимӗн тума та пултараймарӑм. Унтанпа вара эпӗ аннӳне курман», – вӗçлерӗ сӑмахне асламӑшӗ.

– Асанне, тен эпир аннене çӑлма пултаратпӑр? – хӑпартланса калаçрӗ Марине.

– Мӗнле?

– Каçхине çӑлтӑрсем тухсан çӑла сиксе аннене шырама пуçлатӑпах!

– Ан ухмахланах, ачам. Усалсен тӗнчине лекме пулӗ-ха, анчах та шывран каялла тухма йывӑр-çке. Унта çынсем путса вилеççӗ. Эпӗ ватӑ, сана пӗччен ямастӑпах.

Марине унпа килӗшенçи пулчӗ, анчах та асламӑшӗ çывӑрнӑ чухне çула тухма шутларӗ. Çав каçхине вӑл кил картишне тухрӗ те çӑл патне пырса тӑчӗ. Малтанах иккӗленчӗ-ха анчах та амӑшне аса илсе ӑна ирӗке кӑларма шутларӗ. Виççӗ таран шутларӗ те куçӗсене хупса çӑла сикрӗ. Куçӗсене уçсан хӑйне хӑй ӗненмерӗ: вӑл темӗнле асамлӑ тӗнчене лекнӗ иккен. Йӗри-тавра хуп-хура: хура йывӑççем, пӗлӗт, курӑк...

Ун умӗнчен икӗ мулкач этем чӗлхипе калаçса пыраççӗ. Марине тӗлӗнсех кайрӗ. Вӑл вӗсенчен шуйттансен патши ӑçта пурӑннине ыйтрӗ. Лешӗ çак вӑрман варринче ларакан керменте пурӑнать-мӗн.

– Эсӗ вара унта мӗн çухатрӑн? – ыйтрӗ пӗр мулкачӗ.

– Хамӑн аннене.

– Кам вара санӑн аннӳ?

– Ӑна патшан тарçи вӑрласа тарнӑ.

– Мӗншӗн?

– Вӑл кунти патшана килӗшнӗ, лешӗ ӑна хӑйӗн арӑмӗ тӑвасшӑн пулнӑ.

– Апла патшан арӑмӗ санӑн аннӳ пулать?

– Çапла пулма кирлӗ, анчах та эпӗ ӑна пӗртте курман.

– Патша арӑмӗ питӗ ырӑ, анчах та хӑй ун пек мар. Эсӗ аннӳне хӑтарма килнӗ-и?

– Çапла!

– Ку çӑмӑл ӗç мар. Кермене кӗмелли алӑксем тупмалли юмахсене тӗрӗс пӗлсен кӑна уçӑлма пултараççӗ. Санӑн виçӗ алӑк витӗр тухма тивет, кашнинчех тӗрлӗ ыйтӑвӑн хуравне тӗрӗс пӗлмелле. Унсӑрӑн хӑв та пӗтетӗн, аннӳне те çӑлаймастӑн.

– Эпӗ пӗччен хӑратӑп, манпа пӗрле пыр-ха, тархасшӑн.

– Эсӗ лайӑх хӗрача, ман сана пулӑшас килет. Кайрӑмӑр.

Вӗсем нумай та утмарӗç, хупхура тӗслӗ кермен умне çитсе тӑчӗç. Пӗрремӗш алӑк умӗнче виçӗ шуйттан тӑрать, кашниех Маринене тупмалли юмах пачӗ. Вӗсен тупсӑмӗсене хӗрача тӳрех пӗлчӗ. Вӗсене малалла кӗртсе ячӗç.

Иккӗмӗш алӑк умӗнче те виçӗ усал тӑратчӗ, вӗсен тупмалли юмахӗсем йывӑртарахчӗ, анчах та Марине шутларӗ-шутларӗ те тупсӑмне тупрӗ-тупрех. Тепӗр алӑк умӗнче пӗр усал çеç тӑрать. Вӑл хӑйӗн тупмалли юмахне каларӗ. Марине чылайччен шухӑшларӗ, нимӗн те шутласа кӑлараймарӗ. Куляннипе макӑрма пуçларӗ.

– Мӗншӗн макӑратӑн? – ыйтрӗ унран мулкач-тусӗ тӗлӗнсе.

– Эпӗ ку ыйтӑвӑн тӗрӗс хуравне пӗлместӗп, – терӗ те тата хытӑрах йӗре пуçларӗ.

– Эпӗ пӗлетӗп, – терӗ те мулкач хӗрачана хурава вӑрттӑн пӗлтерчӗ. Ку çӗршывра мулкачсем те ӑслӑ иккен. Алӑк уçӑлчӗ те вӗсем патша пӳлӗмне кӗрсе тӑчӗç.

– Камсем эсир? Мӗн тума килтӗр? – хӑрушӑ сасӑпа ыйтрӗ усалсен патши.

– Эпӗ сирӗн арӑмун хӗрӗ. Аннене киле илсе кайма килтӗм.

Çакна илтсен Марине амӑшӗ хӗрне пырса ыталарӗ, савӑннипе йӗрсе ячӗ.

– Пӑрӑн хӗрӳ патӗнчен! Эпӗ арӑма никама та парса ямастӑп! Пӑрӑн, унсӑрӑн кӗçех ачусӑр тӑрса юлатӑн!

Амӑшӗ Марине патӗнчен пӑрӑнчӗ.

– Эпӗ те хам аннешӗн темӗн тума хатӗр, – терӗ Марине. – Ярсам пире киле, – хӗрача йӗрсе ячӗ.

– Ну, юрать, килӗшетӗп. Анчах та эсӗ аннӳне çак акӑшсем хушшинче шыраса тупсан çеç пӗрле илсе каятӑн, – çапла каласа шуйттан патши Маринене виçӗ акӑш умне тӑратрӗ (вӑл хӗрача амӑшне паллаймастех тесе шутлать). – Аннӳне уйӑрса илсен манӑн тӗнчерен кайма пултаратӑр.

«Аннене мӗнле уйӑрса илес манӑн?» – вӑрттӑн ыйтрӗ мулкач-тусӗнчен Марине.

– Акӑшсен куçӗсене сӑнаса пӑх, хӑшӗсем сан çине ӑшшӑн пӑхаççӗ, çавӑ – санӑн аннӳ.

Марине акӑшсем çине тинкеререх пӑхрӗ те пӗрин куçӗсенче куççуль тумламӗ асӑрхарӗ: «Акӑ манӑн анне! – иккӗленмесӗрех каларӗ вӑл акӑша çунатӗнчен ачашласа. Çав самантрах кайӑк Маринен амӑшне çаврӑнчӗ, тепӗр иккӗшӗ куçран çухалчӗç.

Патша Маринен амӑшне ярасшӑн марччӗ. Каланӑ сӑмахне тытмасан унӑн та инкек пулать-мӗн. Пурпӗрех вӗсене ирӗке яма тиврӗ.

Мулкач киле каймалли çула кӑтартрӗ. Вӗсем вӑрманти çӑла сикрӗç те тӑван кил хушшине таврӑнчӗç. Асламӑшӗ çывӑх çыннисене курсан питӗ савӑнчӗ, ыталаса чуп турӗ. Вӑл Маринене çула пӗччен тухнӑшӑн ятласшӑнччӗ, анчах та амӑшӗпе таврӑннишӗн вӑрçмарӗ.

Мулкач ку таранччен çын пек пуплетчӗ, халӗ вара пачах калаçаймасть. Марине ӑна питӗ юратать. Çапла вара вӗсем тӑваттӑн пурӑнма пуçларӗç.

*Вера УСТИНОВА.*
Хӗрлӗ Чутай районӗ,
Штанаш шкулӗ.

ЫЙТСА ПĔЛНИ



# «Вăрттăнлăхра юлтăр хальлĕхе»

**Çак шкулта пултаруллă ача нумай: юрлаççĕ, ташлаççĕ, хоккейла выляççĕ. Çулталăк каялла çак пĕлӳ çурчĕ хăйĕн çĕр çулхи юбилейне уявларĕ. Ача-пăча пулсан вăл ватăлмасть те!**

Çакна вунпĕрмĕш класра вĕренекен Елена Романова та çирĕплетет. Паянхи куна пике тăван шкулăн чи сутă çăлтăрĕсенчен пĕри шутланса тăрать. Ленăн пултарулăх енĕсене асăнса та ситерейĕмĕн: вăл ăста программист, вăйлă спортсменка, вĕренӳре те аван ĕлкĕрсе пырать. Район администраци Пуçлăхĕн стипендине илсе тăрать. Хĕр районти общество пурнăçне ырă енне улăштарма тăрăшакан активистсенчен пĕри. Çапах та хăйĕн çинчен мăнаçланса каласма юратмасть вăл: «Малтан ĕçре кăтартасчĕ-ха хама», – тесе йăл кулать çеç.

– Спортпа миçе çулта туслашрăн? – кăсăклантăм эпĕ.

– Пĕрремĕш класра пуçласа йĕлтĕр çине тăтăм. Хальхипе танлаштарайман ĕнтĕ, анчах ун чух мухтанаттăмччĕ, – терĕ Лена кăмăллăн. – Халь темшĕн мухтанас килмест, пĕрре çĕнтерсен сахал, хама ялан малта курма тăрăшатăп, пĕр вырăнта тăрас мар тетĕп. Унчченхи грамотăсемпе çеç мар, çĕннисемпе те савăнас килет манăн.

– Шкултан тухса кайма йывăр мар-и? Сансăр тăван шкул нумай çухатать пек туйăнать.

– Шел пулин те вăхăт çитсессĕн нимĕн те тăваймăн. Ман пеккисем вара пĕрре кăна пулмĕç, лайăххисем те тупăнĕç, шкул пурнăçне эпĕ кăна пысăк витĕм кӳретĕп тенипе килĕшместĕп.

– Лена, çитес экзаменсем хытă шиклентереççĕ-и? Хăвăн вăйна шанатăн-и?

– Ку ыйтăва çирĕппĕн хуравлаймастăп. Анчах экзамен йĕркисене вăйлатнине курсан хама çеç шанмаллине ăнланатăп. Учительсем уроксем хыççăн иртмерекен консультацисене çӳретĕп. Килте хам тĕллĕн тест кĕнекисемпе те хатĕрленме тăрăшатăп.

– Эсĕ шкулти пур мероприятие те хутшăнатăн: кашни уйăхра иртекен сывлăх кунĕсене, кĕрхи балсене, шкулти волейболпа баскетбол ăмăртăвне ...

– Йывăр, пĕлетĕп. Анчах йăлана кĕнĕ пурнăçа улăштарма пултараймастăп, нихăçан та йăлăхтарас çук ку. Выляма е хутшăнма май килмест пулсассăн пăхма та пулин тăрăшатăп. Акă тĕслĕхрен, юлташсемпе шăматкунсерен ял каччисем хоккей вылянине курма çуретпĕр. Вĕсемшĕн «чирлетпĕр».

– Эпĕ пĕлнĕ тăрăх эсĕ пуçламăш шкултанпах спортпа интересленетĕн. Санăн пулас професси те çавăнпах сыхăннă-ши?

– Çапла. Анчах ку вăрттăнлăха эпĕ халех уçасшăн мар. Экзамен тытаймасан ахаль каласнă пекех пулĕ.

– Хĕлĕн пĕрремĕш уйăхĕ ăнăçлă иртрĕ-и саншăн?

– Шел пулин те, çук. Кĕтмен çĕртен чирленине пула декабрь уйăхĕн çурринĕ больницăра тата килте ирттертĕм. Шкул пирки вăхăтлăха манма тиврĕ. Анчах январьте пур ăмăртăва та хутшăнтăм, грамотăсемпе дипломсем те çĕнсе илтĕм.

– Эсĕ шкул музейĕнчи экскурсовод тивĕçне те пурнăçлатăн. Экспонат чылай пуçтарăнчĕ-и? Эсир вĕсене ăçтан тупатăр?

– Ял çыннисем вăрçăра пулнă тăванĕсем пирки каласа пэраççĕ, вĕсен сырăвĕсене, çи-пуçне параççĕ. Ытти экспонатсем те чылай пирĕн: кивĕ сават-сапа, пăчкă-пуртă, темĕн те пур. Кунер ялĕн паллă çыннисемпе, вĕсен ĕçĕсене уйрăм кĕтес уйăрса патăмăр. Шкул хăнисене валли музей яланах уçă. Çитсе курăр, савăнсах кĕтетпĕр!

***Иван ДЕРЮЖИН.***

Куславкка районĕ,
Кунер шкулĕ.

СЕМИНАР

# Патăрьелĕнче Литература тата К.В. Иванов çулталăкĕ уçăлчĕ



Нумай пулмасть Патăрьел районĕнчи Патăрьелти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан пĕрремĕш вăтам шкулта литература тата К.В.Иванов çулталăкне халаллана «Тĕрлĕ халăх культури çыхăнăвĕсене аталантарассине тĕпе хурса ĕçлесси» семинар иртрĕ.

Семинара Патăрьел район администрацийĕн вĕренӳ пайĕ тата чăваш чĕлхипе литератури, тăван ен историйĕпе культурине вĕрентекенсен пĕрлешĕвĕ йĕркелерĕ. Унта Патăрьелпе Шупашкар районĕн чăваш чĕлхипе литератури тата тăван ен историйĕпе культури вĕрентекенĕсем тата Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн пайташĕсем Юлия Анисимовăпа Геронтий Никифоров хутшăнчĕç. Шупашкартан килнĕ хăнасене пĕрремĕш шкул ачисем çăкăр-тăварпа тата Первомайски шкулĕн ача-пăча фольклор ансамблĕ (ертӳçи – Елена Сорокина) юрă-ташăпа кĕтсе илчĕç. Хыççăн шкулти акт залĕнче ачасемпе вĕрентекенсем пултарулăхĕпе паллаштарчĕç, пĕчĕк концерт лартрĕç.

Тĕп каласура 2014 çулта Патăрьел районĕн чăваш чĕлхипе литератури, тăван ен историйĕпе культури вĕрентекенĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарăмăр. Тăван чĕлхепе литература кунта хисепре. Çыравçăсемпе пуян районта йăлана кĕнĕ мероприятисем çулсерен ирттереççĕ: Марина Карягина, Геннадий Айхи, Раиса Сарпи вулавĕсем, «Ăслăлăх. Тĕпчев. Аталану» пултарулăх, «Уçă урок» меслетлĕх тата «Туслăх хĕлхемĕ» фестивальсем, предмет олимпиади, «Чĕвĕлти чĕкеç» вăйă-конкурс, пултарулăх каçĕсем, «Çулталăк учителĕ» конкурс тата ыттисем те.

Патăрьел районĕнче чăваш, тутар, вырăс, ирçе-мăкшă халăхĕ пурăнать. Тутар ялĕсем темиçе те. Тĕслĕхрен, Шăнкăртан, Тутар Сăкăчĕ, Ксыл-Чишма тата ыттисем. Районăн тĕрлĕ халăхĕ те, ачисем те пĕр-пĕринпе туслă пурăнаççĕ. Чылайăшĕ пĕрле пĕр шкулта вĕренет. Учительсем тĕрлĕ халăх культури çыхăнăвĕсене аталантарассине тĕпе хурса ĕçлеççĕ.

Патăрьел районĕн шкулĕсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентмелли сехет шутне чакарманни пире савăнтарать. Пултаруллă вĕрентекенсен йышĕнче В. Яковлева, М. Табакова, М. Мадюкова, Г. Хлебникова, С. Кулакова, Е. Сорокина тата ытти ĕçтешсем районта тата ун тулашĕнче иртекен меслетлĕх семинарĕсене, тĕрлĕ пултарулăх ăмăртăвĕсене хастар хутшăнаççĕ.

К.В. Иванов çулталăкĕнче иртекен тĕп мероприятисем, «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» пултарулăх конкурсĕ тата «Илпек Микулайĕн юбилейĕпе «Хура çăкăр» роман тăрăх викторина çинчен» калаçу пулчĕ.

Литературăна тата К.В. Иванов çулталăкне халаллана «Тĕрлĕ халăх культури çыхăнăвĕсене аталантарассине тĕпе хурса ĕçлесси» семинара хутшăнакансем канашлăва тухăçлă вĕçлесе темиçе йышăну турĕç. Вĕсенчен чи курăмлисем, пахалăхлисем çаксем пулчĕç: шкул вĕрентĕвĕ валли халĕ тухакан кĕнекесене çĕнĕлле кăлармалла, грамматика таблицисен электронлă вариантĕ пулмалла, шкул вĕрентĕвĕнче хальхи орфографие сыхласа хăвармалла, кашни чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенне компьютер оборудованийĕпе тивĕçтермелле, тăван ен историйĕпе культурине эрнере 1 сехет вĕрентмелле, 9 класс вĕренсе пĕтерекенсене вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче шкулта чăваш чĕлхипе экзамен тыттармалла, экзамен формине шкулăн хăйĕн суйласа илмелле.

***Геронтий НИКИФОРОВ,***
***Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ,***
***«Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕ» общество организацийĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕсен секцийĕн ертӳçи, Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн тата вĕренӳпе ăслăлăх комитечĕн пайташĕ.***

# Пĕчĕк çынсене илместпĕр!




Шкулта лайăх вĕреннине кура Канашри педагогика училищине заявлени кайса панă Вăрмар районĕнчи Çитмĕшри Дмитрий Егорович Егоров. Документ йышăнакансем унăн çуралнă çинчен ĕнентерекен хутне уçса пăхнă та:

– Ачам, кунта вунпиллĕк тултарнисене çеç вĕренме илеççĕ, – тенĕ кĕскен хайхискерсем.

– Пĕлетĕп, анчах манăн питĕ учитель пулас килет. Кĕçех эпĕ те вунпиллĕкре пулатăп-çке...

Лешсем унăн сăмахĕсене хăлхисене те чикмен, пĕтĕм документĕсене пуçтарса каялла тыттарнă. Арçын ача ĕсĕклесех макăрма тытăннă.

– Манăн вĕренес килет! Экзаменсене тытма ирĕк парсамăр пĕрех хутчен, – йăлăннă хайхискер ниçта кайса кĕреймι.

Тинех чунĕсем çемçелнĕ йышăну комиссийĕнчисен.

– Апла хăтланса пăхсам. Тен, чăнах та телей кайăкне тытма пултаратăн, – тенĕ.

Училищĕне вĕренме кĕрес текен нумай пулнă. Пĕр вырăна сакăр ача! Çапах та Митьăна телей кайăкĕ хăйĕн çунаттипе сĕртĕнсе илнĕ. Вĕренме кĕнех!

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан Дмитрий Егоров та ытти çамрăк пекех военкомата васканă. Унта пынă пур çамрăка çара юрăхлă тенĕ, пĕр Митьăна çеç:

– Эсĕ çўллĕшпе шит тăршшĕ кăна... Кур-ха ытти йĕкĕтсене, кашта пек тăраççĕ. Санăн та çавăн пек çитĕнмелле... Çўллĕ тўпене яштака хурăн кармашнă евĕр, – тенĕ ăна.

Çакă сăмахсем питĕ кўрентернĕ мал ĕмĕтлĕ çамрăка. Апла пулин те çар комиссариатне темиçе те кайнă, вăрçа яма тархасласа ыйтнă. Пĕррехинче вара, тĕлĕнмелле пулин те, фронта кайма повестка панă.

Митьăн аслă пиччĕшĕ вăрçăра пуçне хунă, çак хыпар аллă иккĕри ашшĕне çапсах хуçнă. Чăтайман енне:

– Ывăлăмшăн тавăратăпах! – тесе çапăçу хирне тухса кайнă.

Вăрçă хыççăн шкулта та, институтра та темиçе çул вăй хунă Дмитрий Егорович. Шкул ачисемпе студентсем ăна юратса хисепленĕ.

Иртнĕ çул ноябрь уйăхĕнче 90 çул тултарнă ветеран кăçалхи чаплă уява сумлăн кĕтсе илесшĕн.

– Çĕнтерĕве çывхартма эпир пурте тăрăшнă-çке, – тет шухăша путса.

# Аттене парне тăвасшăн




Йĕпреç районĕнчи Пучинкери Эля Пашкова садике çўреме юратать. Унта ăна питĕ килĕшетçке. Шăматкунсерен, пиччĕшĕ шкула тухса каймассерен, куçĕ куççульпе тулать унăн.

– Анне, нимĕн те ăнланмастăп... Шăматкун канмалли тетĕн, мĕншĕн пичче шкула каять? Апла пулсан манăн та садике васкамалла. Ирĕк парас пулсан кашни кун садике çўремелле эпĕ. Унта лайăх. Воспитательсем ырă кăмăллă, тутлă апат çитереççĕ. Тата та килĕшекенни – пурте пĕрле ăмăртмалла ўкерни. Анне, ўссен художник пулас килет манăн. Чим, мансах кайнă, паян пиччепе иксĕмĕр хитре ўкерчĕк тăвасшăн. «Кĕçех февралĕн 23-мĕшĕ çитет, унччен атте валли парне туса ĕлкĕрмелле. Вăл салтакра пулнă, Тăван çĕршыв сыхлавçи, апла пулсан пирĕн ăна манмалла мар», – терĕ пичче. Эпĕ хаваспах килĕшрĕм. Çапах вăл шкултан таврăниччен урама çунашкапа ярăнма тухам-ха, – тесе Эля тăхăнма та пуçларĕ.

# Пире вăрçă кирлĕ мар!



Шкултан таврăннă хыççăн Настя канмалла тесе диван çине вырнаçрĕ.

– Юнтапаран Кивкаса утмалăх пур. Ывăннине иртерме вăрçă çинчен çырнă кĕнекене пилĕкултă страница вуласа тухам-ха, – тесе сумкине уçрĕ.

Сасартăк кўршĕре пурăнакан Лиза кинемей каласа пани аса килчĕ Настьăна. Ара, вăл та вăрçă ачи пулнă-çке.

«Шкула каяс килетчĕ. Унта кашни кун пашалу татăкĕ паратчĕç. Тăхтава кĕтме хал çитерейместĕм, ырă шăршăллăскерне урокрах пĕчĕккĕн чĕпĕте-чĕпĕте илсе чăмлаттăм. Вĕрентекен мĕн ăнлантарни хăлхана та кĕместчĕ. Киле çитсен тата мĕн активсе пăхмалла-ши тесе пуçа ваттăм. Хăш ана çине çитсе çĕрĕк çĕрулми шырамалла-ши тесе кулянаттăм.

Чĕкеç аппа почтăра ĕçлетчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче куллен салтак çырăвĕсем валеçетчĕ. «Сирĕн ывăлăр е мăшăрăр паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ», – текен хута вуласан хăй те куçĕсем хĕреличченех макăратчĕ.

Пĕр кунхине мана та ытти хĕрпе пĕрле вăрман касма тытса ячĕç. Пуçа çĕклейми ĕçлетпĕр сивĕ çанталăкра. Вутă çурса купалатпăр. Шăннипе кăвайт çумне тĕршĕнтĕм. Пăрланнă çăпата ирĕлтĕр тесе урана ăшăрах çĕрелле тĕртрĕм. Ак тамаша! Çунать манăн çăпата! Сўнтертĕм те малалла ĕçе пуçăнтăм. Çилтăман тухрĕ. Кун пек çанталăкра килте çеç лармалла та.

– Лиза, çунатăн! – тенипе шартах сикрĕм.

Фуфайка çине кăвайт сиксе ўкнĕ иккен. Самантрах хĕллехи тума юр çине хывса пăрахрĕм. Шăрша пĕлменни инкек патне илсе çитерчĕ. Юнашар çынсем пулман тăк?

... – Вăрманта мĕн тăватăн? Аннў вилнĕ... Кай килне, – терĕç пĕр кунхине вăрман турттаракансем.

Çак хыпара илтсен йывăçа ыталаса темччен макăртăм. Кайран тарăн юра ашса киле аран çитрĕм. Пўрт алăкне чĕтрекен аллăмсемпе уçрăм. Тĕпел кукринче икерчĕ пĕçерекен Чĕкеç аппа мана курсан ыталаса илчĕ те:

– Малашне епле пурăнăпăр? – тесе ĕсĕклерĕ.

Эпĕ те чăтайман енне вырăн çинче йăваланса макăртăм. Аннене юлашки хут курса юлаймарăм... Унăн аллисене, питне те сĕртĕнме пултараймарăм. Мĕнле пытарнине те пĕлместĕп.

Чĕкеç асли пулнă май пĕтĕм йыварлăх ун çине тиенчĕ. Вăл пирĕншĕн аттепе-анне вырăнĕнчех пулчĕ. Анчах пĕррехинче чуна ыраттармалли хыпар пĕлтĕм: аппа кўршĕ яла качча каять.

Петя шăллăмпа иксĕмĕрех юлтăмăр. Юрать колхозран вунă куна вунă кило çăнăх параççĕ. Унсăрăн выççах вилмелле. Çăкăр пĕçерсе çиес – нумайлăха пымасть. Шыв вĕретсе çăнăхран нимĕр тăватпăр.

Правленире ĕçлеме тытăнтăм. Ирех тăрса вутă хутаттăм. Каçпа çак çурта рабочисем радио итлеме килетчĕç. Пирус мăкăрлантарса çĕршыв хыпарĕсене итлетчĕç. Пўрт йăлтах сĕрĕм ăшĕнчеччĕ. Тĕтĕм куçа кĕретчĕ пулин те пўрт ăшши кăмăла çĕклетчĕ. Эпир шăллăмпа кăмака çинче выртаттăмăр. Хĕлле киле çўремен, мĕншĕн тесен кăмака хутма вутă пулман...

Шăллăм вунултă тултарсан ăна вăйпах Челябинска шахтăна ячĕç. Кулянниnе вăйран кайрăм. Шăп çак вăхăталла аппа упăшкинчен уйрălса икĕ ачипе тăван тăрăха таврăнчĕ. Тăваттăн пурăнма тытăнтăмăр атте-анне килĕнче.

Мускава вербовкăпа ячĕç. Аппа тăтăш çыру çырать. Яла таврăнма тархаслать. Чăтаймарăм, тепĕр икĕ çултан тăван тăрăха вĕçтерсе çитрĕм.

Картише кĕрсен шанк! хытрăм. Ĕне çўрет картишре! Ман çине ют çын тесе пăхать пулас. Куçăмран савăнăç куççулĕ юхса анчĕ. Унта та кунта чăхсем чупаççĕ тата! Пирĕн çак таранччен килте ĕне мар, кушак та пулман-çке! Аппа, юратнă аппа, темле йывăр пулсан та, тăрăшнă... Ачисемшĕн те, маншăн та...

Хуçалăх çĕрĕшме тытăнчĕ. Çĕнĕ çурт лартма ĕмĕтленеттĕмĕр. Шăп çак вăхăтра Карагандари шăллăм çыру ячĕ, хăй патне куçса пыма чĕнет. Пурăнмалли вырăн та тупса пама шантарать. Чĕкеç хĕпĕртерĕ. Каятăп тет. Манăн чун туртмарĕ. Чăн та, Чĕкеç ачисемпе ют хулана тухса кайрĕ. Ĕнине мана парнелесе хăварчĕ... Ах, вăрçă вăхăтĕнчи пурнăçа аса илсен... Хăрушă пулса каять», – тенĕччĕ ун чухне Елизавета Федоровна Никифорова.

Аллинчи кĕнекене çўлĕк çине хучĕ те чўречерен картиш еннелле тинкерчĕ Настя. Вĕсен ĕнисем Милкăпа Маня симĕс утă çисе тăраннă пулас, кăмăллăн кавлесе тăраççĕ. Сурăхĕсем те лăпкăн кăна сырăш çинче çăкăр тĕпренчĕкĕсемпе апатланакан çерçисем енне вашаватлăн тинкереççĕ.

– Эпир, паянхи ăру, телейлĕ... Вăрçă вăхăтĕнче тата ун хыççăнхи çулсенче те пирĕн асаннесемпе кукамайсен картишĕсенче нимĕнле вылăх пулман. Паян авă сырăшра киленекен çерçи те телейлĕ. Çук, пире вăрçă кирлĕ мар, нихăçан та! Манăн ялăнах, ирхине куçа уçса ярсанах, кантăкран хĕвел çути кĕнине, атте-анне, тăвансен пит-куçĕнче йăл-кулă пулнине курас килет. Тусюлташсен те пурнăçĕ тикĕс сукмакапа чупăрччĕ, ялан ах. Çапла, çапла, пире нимĕнле вăрçă та кирлĕ мар... Авă картишри ĕнесем те паянхи кунпа епле кăмăллă, хырăмĕсем тутă, вите ăшă... Кунран ытла тата мĕн кирлĕ вĕсене? – терĕ Элĕк районĕнчи Кивкасра пурăнакан Настя Максимова çаплипех куçне картиш енчен илеймесĕр.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-83-86) хатĕрленĕ.*

**80-мӗш ҫулсенче ҫак икӗ ята Совет Союзӗнче тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенче пурте тенӗ пекех пӗлнӗ. Хальхи ҫамрӑксене Саманта Смит ячӗ нимӗн ҫинчен те каламасть. Историпе кӑсӑкланакансем ҫеҫ аса илӗҫ: тахҫан пурне те хумхантарнӑ ҫыру ҫырнӑ хӗрача пулнӑ. Катя Лычева ҫинчен авӑ вуҫех те маннӑ.**



# САМАНТА СМИТ ТАТА КАТЯ ЛЫЧЕВА: тӗнчипе паллӑ хӗрачасем

• Геннадий ФРОЛОВ



### Генеральнӑй секретаре ҫырас

Паян, кирек хӑш ҫӗршыва та ирӗклӗнех кайма май пур чухне, 1983 ҫулта ССР Союзне Америкӑран 11 ҫулти хӗрача килни пурне те еплерех аптратса ӳкернине куҫ умне кӑларса тӑратма йывӑр.

Брежнев вилнӗ хыҫҫӑн КПСС Тӗп Комитечӗн генеральнӑй секретарӗн вырӑнне Юрий Андропов йышӑннӑ (маларах вӑл Патшалӑх Хӑрушсӑрлӑх Комитетне ертсе пынӑ). Ҫакнашкал улшӑнусем Хӗвеланӑҫӗнче чылайӑшне сехӗрлентернӗ. Ҫав вӑхӑтри нумай ача ракетӑсем атакӑласран хӑранӑ.

Мэн штатӗнчи пӗчӗк хӗрача та ҫавӑн пекех хӑранӑ-тӑр. Америка шкулӗнчи ыттисенчен нимӗнпе те уйрӑлса тӑман ача чӗрчунсене юратнӑ, ветеринар пулма ӗмӗтленнӗ, гимнастикӑпа, бейсболпа кӑсӑкланнӑ.

Пӗррехинче "Тайм" журналта Саманта Юрий Андроповӑн сӑнӳкерчӗкне курнӑ. Амӑшӗ Джейн хӗрне ку кам пулнине, Совет Союзӗ ӑҫта вырнаҫнине, унпа мӗншӗн вӑрҫӑннине ӑнлантарса панӑ. Хӗрача чи ҫывӑх ҫыннине СССР ертӳҫине ҫыру ҫырма ыйтнӑ, амӑшӗ ӑна ку ӗҫе хӑй тӗллӗнех пурнӑҫлама сӗннӗ. Саманта ашшӗ Артур акӑлчан чӗлхине вӗрентекенӗ пулнӑ, хӗрачана пӗчӗк чухнех ҫырусем ҫырма хӑнӑхтарнӑ. Ҫапла Андропов патне пӗрремӗш ҫыру килнӗ.

### Юрий Владимирович хуравланӑ

*"Хисеплӗ Андропов мистер! Мана Саманта Смит тесе чӗнеҫҫӗ. Эпӗ 10 ҫулта. Сире ҫӗнӗ должноҫа суйланӑ ятпа саламлатӑп. Эпӗ ССР Союзӗпе АПШ хушшинче ядерлӑ вӑрҫӑ пуҫланасран питӗ канӑҫсӑрланатӑп. Эсир вӑрҫа хирӗҫ пулсан ӑна мӗнле майпа сирсе яма шутлатӑр? Паллах, эсир манӑн ыйтӑва хуравлама тивӗҫлӗ мар, анчах та манӑн ҫакна пӗлес килет: мӗншӗн-ха эсир пӗтӗм тӗнчене е, калӑпӑр, пирӗн ҫӗршыва ҫӗнсе илесшӗн? Турӑ Ҫӗре пурте пӗрле тӑнӑҫлӑхра пурӑнччӑр тесе туса янӑ.*

***Сире чун-чӗререн хисеплесе – Саманта Смит".***

"Правда" хаҫат Саманта ҫырӑвӗн фотокопине, унӑн куҫарӑвне тата ӑнлантарса панине пичетленӗ. Анчах та хӗрача ыйтӑвӗсене хуравланисем пулман.

Вара вӑл иккӗмӗш ҫыру ҫырнӑ, чӑн та, Андропов патне мар, ССР Союзӗн Вашингтонри посолне Добрынина. Кӑштах вӑхӑтран вырӑнти почта уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ Саманта патне шӑнкӑравланӑ, Андроповран ҫыру килнине пӗлтернӗ.

Америкӑн инҫетри кӗтесӗнчи Манчестершӑн ҫакӑ бомба ҫурӑлнӑ пекех пулнӑ. Сенсаци! Тепӗр тесен, Америка кӑна мар, пӗтӗм тӗнче тӗлӗннӗ.

Андропов хуравӗн пӗлтерӗшӗ ансат пулнӑ. СССР никампа та ҫапӑҫма шутламасть, совет ҫыннисем те мирлӗ пурӑнасшӑн. Иккӗленӳ ҫуралсан ҫулла Саманта Союза килтӗр, веҫех хӑйӗн куҫӗпе куртӑр.

1983 ҫулхи июньте Саманта, Джейн тата Артур Смитсем Совет Союзне вӗҫсе килнӗ. Пирӗн ҫӗршывра американсене тарават кӗтсе илнӗ, пур ҫӗрте те парнесем панӑ.

### Америка ачине кунта лайӑх

Саманта Союзра курса ҫӳренӗ, ун ҫинчен хатӗрленӗ репортажсене "Вӑхӑт" программа трансляциленӗ. Пӗтӗм тӗнчери "Артек" пионерлагере яланхи пек мар тирпейленӗ, унта Смит тӑватӑ кун пурӑннӑ.

Чаплӑ хӑна килнӗ ҫӗре пӗр уйӑх хатӗрленнӗ. Лагерьте ӗҫлекенсене хӑйсене мӗнле тытмаллине вӗрентнӗ: телетата фотокамерӑсен объективне лекме тӑрӑшмалла мар, тӑшман корреспонденчӗсемпе питех калаҫас ҫук. Лагерьте Самантӑна валли чи лайӑх корпусра икӗ ача пурӑнмалли пӳлӗм уйӑрнӑ, тӗслӗ кӑтартакан телевизор лартса панӑ. Ахалех хыпкаланнӑ. Самантӑна е пӳлӗмре уйрӑм, е пур ачапа та пӗрле пурӑнма сӗннӗ. Вӑл пионерсемпе пурӑнасси ҫинчен пӗлтернӗ. Унта хӗрача пурнипе те хӑвӑртах паллашнӑ, ҫапах та Ленинградран пынӑ Наташа Каширинӑна ытларах юратнӑ, лешӗ акӑлчанла питӗ лайӑх калаҫнӑ. ССР Союзӗ арканнӑ хыҫҫӑн Наташа Америка ҫынни качча тухнӑ, Калифорние куҫнӑ.

Самантӑн питӗ каяс килмен, анчах та ӑна Мускавра тӗлпулусем кӗтнӗ. Шел те, Андропов ун чухне йывӑр чирленӗ, ҫавӑнпа иккӗшӗ тӗлпулайман, генсек ӑна телефонпа шӑнкӑравласа саламланӑ.

### Ҫӗрлехи вӗҫев

АПШна таврӑнсан Саманта Смит ӑслӑланнӑ - хӑйӗн пысӑк яваплӑхне туйса илнӗ тейӗн. Америкӑри ятарлӑ службӑсем унпа нумай "ӗҫленӗ", ҫапах та хӑйсемшӗн кӑсӑклине нимӗн те тӗпчесе пӗлеймен.

Пӗтӗмӗшле илсен, 1983 ҫулта ҫакӑн пек пурте пӗлекен ача Союзра та, Штатсенче те текех пулман. Икӗ ҫӗршыв хушшинче сивӗ вӑрҫӑ пынӑ пулин те, ачасем, ҫитӗннисемпе танлаштарсан, пӗр-пӗрин патне хӑнана ҫӳренӗ. Вӗсене икӗ енчен те тӗплӗн пӑхса суйласа илнӗ, ҫапах та ҫӗр-ҫӗр ҫамрӑкӑн чикӗ леш енне курас шанчӑк ҫуралнӑ.

1985 ҫулхи августра Саманта ашшӗпе пӗрле Аслӑ Британирен таврӑннӑ. Унта вӗсем Роберт Вагнер ирттернӗ шоуна хутшӑннӑ. Америкӑра вырӑнти авиалини самолетне куҫса ларнӑ. Каҫӗ питӗ тӗттӗм пулнӑ, ҫумӑр ҫунӑ – пӗчӗк самолет анса лармалли йӗрпе юнашар ӳкнӗ. Пурте вилнӗ. Саманта Смит 13 ҫулта ҫеҫ пулнӑ.

Саманта Смита асӑнса АПШра тата Раҫҫейре пӗр пек икӗ палӑк лартнӑ: пӗри – Огаста хулинче, тепри – Мускавра. Шел те, иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсенче Мускаври палӑкне тӗслӗ металл шыракансем вӑрланӑ.

Пӗчӗк планетӑсенчен пӗрне Саманта ятне панӑ.





### Катюша Америкӑра

Саманта Смит вилнӗ хыҫҫӑн Америкӑри "Ачасем – миршӗн тӑракансем" организаци АПШна Советсен Ҫӗршывӗнчен шкул ачин визитне йӗркелеме сӗннӗ. Пӗртен-пӗр услови ҫеҫ кӑларса тӑратнӑ – миршӗн тӑракан, Саманта ӳсӗмӗнчи хӗрача пултӑр.

12 ҫулти Катя Лычевӑна 6 пин хӗрачаран суйласа илнӗ. Вӑл чӑнахах та чи лайӑххи пулнӑ – питӗнчен йӑлтӑр кулӑ кайман, акӑлчан чӗлхине лайӑх пӗлнӗ, кинора ӳкерӗннӗ май хӑйне тытма пӗлнӗ.

Катя Мускавра ӑслӑлӑх сотрудникӗсен ҫемйинче ҫуралнӑ, акӑлчан чӗлхине тарӑннӑн вӗрентекен шкулта пӗлӳ илнӗ. Мир посолӗ пуличченех Лычева темиҫе фильмра ӳкерӗннӗ.

1986 ҫулхи мартӑн 21-мӗшӗнчен пуҫласа апрелӗн 4-мӗшӗччен Катя Америка хӗрӗпе Стар Роупа мирлӗ тӗллевпе АПШ территорийӗпе пынӑ. Вӗсен ҫулӗ Сан-Франциско хулинче пуҫланнӑ, хӗрачасем темиҫе хулана ҫитнӗ, Диснейлендпа паллашнӑ. Катя Рональд Рейган президента тӗлпулнӑ.

### Варени, печени...

Килне таврӑнсан Катя паллӑ ҫын пулса тӑнӑ. Ӑна валли миххи-миххипе ҫырусем илсе пынӑ, телекурава тӗлпулӑва чӗннӗ. Совет Союзӗнче ун пирки анекдотсем те ҫӳренӗ: "Ҫӗршыври чи паллӑ 3 хӗрарӑм хушаматне калӑр-ха. Хуравӗ: Пугачева, Горбачева тата Лычева".

Лычева питӗ нумай пионерлагерьте пулнӑ, Америка ҫинчен каласа кӑтартнӑ. Катьӑна килӗштерекенсенчен пӗри ҫав вӑхӑтра Хура тинӗс хӗрринчи лагерьте пулнӑ. Хӗрачана илсе ҫӳрекен автомашина кустӑрмисене шӑтарма хӑтланнине аса илнӗ – лешӗ ҫӗр касма юлтӑр тесе. Палӑртса хунине пурнӑҫланӑ. Каҫхине пуҫтах Лычева пӳлӗмне кӗме хӑтланнӑ, балкон ҫине хӑпарнӑ. "Малалла мӗн пулса иртнине ҫырасах килмест - тепӗр кунхине эпӗ лагерьти медпунктра вӑрантӑм. Юнашарах сӗтел ҫинче - 1 банка варени тата печени, фиалка ҫыххи те илсе пынӑччӗ. Пӗчӗк ҫыру та пурччӗ: "Хӗвеллӗ пурнӑҫ тата ҫирӗп сывлӑх сунатӑп сана. Ырӑ сунса – Катя Лычева".

Ҫак истори тӗрӗс е ҫук – калама йывӑр. Ҫапах та хӗрачана пурте пӗлнӗ. Анчах та Катьӑн тусӗсем пулман. Пӗр класра вӗренекенсем ӑна юратман, ӑмсаннӑ. Ҫитӗнсен Екатерина Лычева хӑйӗн пурнӑҫӗнчи ҫак ҫӑлтӑрлӑ тапхӑра аса илме юратманнине пӗлтернӗ.

### Ҫӳлерех те ҫӳлерех, ҫӳлерех

Лычева ҫӑлтӑрӗ пионер организацийӗсем саланичченех шӑппӑн ҫеҫ сӳннӗ: условисем улшӑннӑ май Катя кирлӗ пулман. Лычева ҫинчен калаҫма пӑрахнӑ, вӑл совет тапхӑрӗн вӗҫӗн символӗсенчен пӗри пулса юлнӑ.

Американсен умӗнче мухтанӑ Тӑван ҫӗршывӗнче Катя тытӑнса тӑман – 90-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче амӑшӗпе пӗрле Францие кайнӑ, Сорбоннӑра вӗреннӗ.

2000 ҫулта Екатерина Лычева Раҫҫее таврӑннӑ: "АвтоВАЗӑн" вице-президенчӗ пулса тӑнӑ. Екатерина Александровнӑн ку таранччен те упӑшки ҫук. Хӗрне пӗччен пӑхса ӳстерет.

***Антонина СЕРГЕЕВА куҫарнӑ.***

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Вилĕмсĕр юрату гимнĕ, е пурнăçра нимĕн те ăнсăртран пулмасть...




**«Хăш-пĕр кĕнекене «активсе» çеç пăхмалла. Теприсене çăтса ярсан аванрах. Тĕрлĕ ыйту тавра шухăшламалăх «çимĕç» параканнисем вара – чи пахисем», – тенĕ Анатоль Франс. Шăпах юлашкисен шутне кĕрет те нумай пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче кун çути курнă Елен Нарпин «Пăрлă шыври хĕвел пайăрки» кĕнеки. Унăн алçырăвĕ ачасемпе çамрăксем валли чăвашла çырнă произведенисен 2013 çулхи конкурсĕнче çĕнтернĕ. Сăмах май, ку пултарулăх ăмăртăвне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2011 çулхи июнĕн 16-мĕшĕнче йышăннă постановленипе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ.**

1000 экземплярлă тиражпа пичетленнĕ кĕнекене (редакторĕ – О.Иванова, ӳнерçи – П.Сергеев) «Пăрлă шыври хĕвел пайăрки» повеçпе «Турамăш çуралнă кун» калав кĕнĕ. Кăларăма аслă классенче вĕренекенсем валли тесе палăртнă пулин те, çитĕннисемшĕн те интереслĕ пулмалла вăл. Ара, унта хускатнă ĕмĕрхи ыйтусем пурне те, кирек хăш ӳсĕмри çынна та, хумхантараççĕ-çке-ха. Мĕнлерех вăл – чăн-чăн юрату? Суя туйăмсенчен мĕнле уйăрса илмелле ăна, епле упраса хăвармалла? Мĕншĕн этем часчасах телейсĕр? Кам е мĕн тата мĕншĕн асапсем ярса парать? Мĕн тума кирлĕ-ха кашнине тĕрĕслевсемпе йывăрлăхсем?

«Пăрлă шыври хĕвел пайăрки» повеçре пурнăçăн анлă çулĕ çине тинтерех тухакан яшсемпе хĕрсен кулленхи ĕç-хĕлне, кăткăс хутшăнăвĕсене, пăшăрханăвĕсавăнăçне сăнланă. Чун-чĕрере çуралнă пирвайхи туйăмсен тасалăхне упрасси пĕртте çăмăл мар иккен. Анчах çыравçă сăнарĕсен кăмăлĕ çирĕп, сăмахĕ татăклă. Илĕртмĕш, суя сукмак енне пăрăнмаççĕ вĕсем», – вулатпăр аннотацире. Çапла, пăрăнмаççĕ, анчах пурнăç хуйхи-суйхинчен те хăтăлаймаççĕ. Тӳсме пӳрнине тӳсмелле, курма хушнине курмалла...

«Юрату туйăмĕ... Кашни çын патне тĕрлĕрен килет вăл. Пĕрне савăнăç кӳрет, сунат хуштарать, теприне чăтайми асап, ырату уйăрать, ырра шанса тĕрекленнĕ çунатсене ним шелсĕр шартах çапса хуçать. Анчах кирек мĕнле пулсан та кашниех çав юрату текен туйăма чăтайми кĕтет. Мĕн илсе килет вăл хăйĕнпе пĕрле – ырату-и е телей, савăнăç-и е куççуль – ку нихăшне те кăсăклантармасть. Килсем, юрату, килсем...» – çырать автор. Повеçри Люба та, вунтăхăр çулти студентка, ĕмĕтленмен мар юрату пирки. Çавăнпах-тăр «йĕпкĕн хура çӳçлĕ, хĕрсене пăлтăр-палтăр çавăрттаракан» Саша вĕçĕмех хĕр патне киле пуçласан, илемлĕ сăмахсемпе кăмăла çĕклесен туйăмсен ытамне чăмать пике. Тĕлпулăва чăтăмсăррăн кĕтни, пĕчченлĕхре тертленни, савни сăнарĕ пурнăçа хĕвел пек çутатса тăнине туйни, утса мар, вĕçсе çӳрени... Кашниех туйнă-тăр çакна. Люба та хăйне чи телейли тесе шухăшланă. Шел те, качча урăххарах инçетсем илĕртнĕ, улталанă-мĕн вăл хĕре. Паллах, черченкĕ чунлăскершĕн ку тĕнче пĕтсе килнипе танах. «Пĕтрĕ, пăрланчĕ, чулланчĕ çакăнтан вара кама та пулин ĕненесси, унтан та ытла – юратма пултарасси», – тет Люба.

Хурлăхлă самантра ялан çапла: асаплану нихăçан та иртмест пек. Анчах сехет йĕппи шăвать, куççулĕ типет, пăшăрхану-тертленӳ вăхăт тусанĕ айне пулать... Çĕнĕ кун çĕнĕ телей пиллет – унччен хинчен те çутăрахxи, илĕртӳллĕреххи, сăваплăраххи. Ĕмĕрне те никама та шанмăп тенĕ Люба Марсельпе паллашать. Шăпах вăл тупать те аманнă чĕрен уççине. Пĕр-пĕрне чунтан саваççĕ, çур сăмахранах ăнланаççĕ чăваш хĕрĕпе тутар каччи. Вăрахлăха уйрăлма тивсен те пĕр-пĕрне манмаççĕ. Туйăмсем сӳнмеççĕ, пачах тепĕр май – хĕрӳлленеççĕ те вăйланаççĕ. Автор вĕсен çивĕчлĕхне тĕлĕнмелле ăста çырса парать: «Манăн тĕнчере мĕн пуррипе çукки çинчен пĕтĕмпех манас килсе кайрĕ. Мур шăтăкне кайччăр пурте! Манăн никамран вăтанмасăр, уççăн, ирĕклĕн юратас килет!.. Марсель тутине кăшт çеç сиктерсе пăшăлтатать. «Савниçĕм... Юратăвăм... Мин сине яраттам...» йышши сăмахсемсĕр пуçне нимĕн те уйăраймарăм эпĕ, анранă пек пулнăскер. Сĕрĕм тивнĕ евĕр, пуçа вăйсăррăн усрăм та унăн çатăр вĕри тути сывлăша пӳлсе хунипе ăнран кайрăм. Тахçантанпа çунса-ирĕлсе каясла кĕтнĕ сыннăмăн аллисем пĕтĕм кĕлеткем тăрăх чупма пикенчĕç...»

Марсельпе Любăн юратăвĕ çăлкуç пек таса та хĕвел пек хĕрӳллĕ. Эппин, мĕн чăрмантарĕ-ха вĕсене пĕрле пулма? Унашкал чăрмавсем çук пек. Чăн-чăн туйăм хăватлă, вăл йăлтах çĕнтерет. Ку, чăннипех те, çапла. Çавăнпа-тăр «Пăрлă шыври хĕвел пайăрки» повесть вилĕмсĕр юрату гимнĕ пек янăрать. Пĕр-пĕрне юратакан чĕресене çын сăмахĕ те, тĕн ыйтăвĕ те, вилĕм те уйăраймĕ. Хайлав эпиграфĕ те çакăн пиркиех çирĕплетет:

Юратуçăм! Пĕр сана ыратăп.
Эс ăста çӳретĕн çак таран?
Эп вилсен те пурпĕрех юратăп,
Сан патах-çке пырăп тупăкран.

***Григорий Илепер***

«Турамăш çуралнă кун» калав та тарăн шухăша путарать. Çĕр çинче пурăннă чухне кашни саманта кирлĕ пек хаклама, тӳрĕ суйлав тума пĕлместпĕр эпир. Пĕр йăнăш утăм хыççăн теприне тăватпăр, майĕпен пĕтĕм пурнăç пысăк пĕр йăнăша çаврăнать. Ах, каялла таврăнасчĕ те, тӳрлетесчĕ те йăлтах... Çук, малаллах ыткăнатпăр. Мăн кăмăллă та ирĕклĕ-çке эпир. Асту, пырса ан перĕн!

Мария та çапла кун кунланă. «Турра ĕненесси çеç мар, Вăл пурри çинчен шухăшлассиi те пулман». Хăй ĕмĕрĕнче чиркӳре икĕ хут – тĕне кĕртнĕ тата венчет тунă чух – пулнă. «Турă мана нимĕн те туса паман, йăлтах эп çак ылтăн пуçăмпа тата ик ĕçчен аллăмпа меллештернĕ тесе каппайланмастăм-и мăшăрăм умĕнче те?» – тет героиня. Анчах пĕррехинче ун тĕнчекурăмĕ те, шухăшлавĕ те тĕппипех улшăнаççĕ. Пĕр пăтăрмах хыççăн тепри сиксе тухать, авари хыççăн чутах вилсе каймасть çамрăк хĕрарăм. «Пĕлетĕр-и, хĕрсем, Турă пур... Эпĕ халь çакна тин ĕнентĕм. Мана Вăл чунăма çăлма тепĕр хут çуратрĕ», – тет Мария.

Çапла, пурнăçра нимĕн те ăнсăртран пулмасть. Кашни пулăм мĕне те пулин вĕрентет, хăй хыççăн вăл е ку улшăнусене ертсе килет. Елен Нарпин «Пăрлă шыври хĕвел пайăрки» кĕнеки те вулакан чĕрине хускатмасăр хăвармĕ. Авторăн пуян та сĕтеклĕ чĕлхи, этем чунне тарăннăн ăнланма пултарни ăна ĕлккен те чĕрĕ ӳкерчĕксем тума пулăшаççĕ. Ун тимлĕхĕнчен ним те йăпшăнса иртеймĕ. Çавăнпа сывăх та унăн сăнарĕсем пире. Çавăнпа вĕсемпе пĕрле савăнатпăр та, хурланатпăр та.

***Ольга АВСТРИЙСКАЯ.***

ШУХĂШ

# Ĕмĕт тӳпине йыхравлакан «Çĕрлехи çутăсем»




***Поэзин асамлă чĕлхи яланах тыткăнланă мана. Этеме хупăрласа илнĕ туйăмсене хут çине куçарма, сăнарлă та илемлĕ çырма пултаракан сăвăçсем вара сăмах ăрăмçисемех. Кĕске кăна çаврара мĕн тери шухăш тарăнлăхĕ пытарăнать. Ăна куçпа курайман, чунпа çеç сисейĕн.***

Аллăма Николай Теветкелĕн «Çĕрлехи çутăсем» сăвăсен пуххи лекрĕ. Чăваш кĕнеке издательствинче 1000 экземплярлă тиражпа пичетленнĕ кĕнекене (редакторĕ – О.Иванова, ӳнерçи – В.Гончаров) поэтăн тĕрлĕ çулсенче çырнă сăввисем кĕнĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенчи романтикăлла туртăм яр уççăнах палăрать чылайăшĕнче. Автор çамрăк чухне хăй те строительте, ӳнерçĕре тăрăшнă. Ĕç сыннисен хуйхипе савăнăçне çивĕч туйни сăвăçа пурнăçа тарăнрах ăнланма пулăшнă, пултарулăхне пуянлатнă.

Николай Теветкелĕн кашни йĕрки-çаврăмне ахах-мерченпе танлаштарма пулать. Чĕрĕ сăнарсем, хăйне евĕр кĕвĕлĕх куç умне илемлĕ ӳкерчĕксем кăларса тăратаççĕ.

Пас тытнă вăрманта эп куртăм çутă тĕлĕк:
умри юр кĕрчĕсем – шап-шурă упасем –
çывхарчĕç ман пата хуллен упаленсе...
Пас тытнă вăрманта пырать пек вăрттăн кĕлĕ.

***(Хĕллехи фантази)***

Юрату лирики илĕртӳллĕ, çутçанталăкĕ те, йывăç-курăкĕ те этем кăмăлĕпе çураçуллă. Сăмахран:

Çамрăк çĕмĕрт çеçкеленчĕ кантăк умĕнче,
каç пулсан куçа илместĕп эпĕ ун çинчен, –
чӳхенет те вăрттăн-вăрттăн тем каласшăн пек,
чун савни пек туйăнать вăл – калаçать тӳлек.

***(Çĕмĕрт чӳхенет)***

Çĕрлехи çутăсем (вăл уйăх, çăлтăр, хунар е савни чӳречин çути) вара ĕмĕт тӳпине йыхравлаççĕ, шанăç пиллеççĕ, кăчăк туртаççĕ.

Ула тӳпере пĕчĕк çăлтăр çисет,
таçта йыхăрать çутă симĕс инçет.

Николай Теветкел пултарулăхĕ нумай енлĕ те иксĕлми. Вăл – поэт, прозаик, драматург, критик, публицист, куçаруçă, ӳнерçĕ. Европа поэзийĕн классикĕсен чылай хайлавне чăвашла куçарнă. Вăл шутра – У.Шекспирăн 154 сонетне, А.Рембо, В.Гюго, Р.Киплинг, А.Мицкевич произведенийĕсене. Çыравçăн пултарулăхне П.Хусанкай, Ç.Элкер, Я.Ухсай, А.Воробьев, А.Алка та пысăк хак панă.

Кичемлĕх авăрне путсан, ывăннине туйсан, чуна тĕксĕм каç чăтăрĕ карса илсен Н.Теветкелĕн «Çĕрлехи çутăсем» кĕнекине уçса вулăр. Вăл сирĕн пурнăçăра çутă пайăркине чĕнсе илĕ. Ун хыççăн вара ĕмĕт те курăнĕ.

***Ольга АВСТРИЙСКАЯ.***

ЧУНРИ

# Кун кĕнекинчен



Хĕл ларчĕ. Юр пĕрре хура та тунсăх çĕре хупларĕ, тепре пачах та çухалчĕ. Çак кун кĕнекине çыраканĕ вуникĕ çул та тултарман-ха...

***Ноябрь уйăхĕн 26-мĕшĕ.***

Ир-ирех чунра канлĕ марччĕ, атте-анне вăрçăннă-çке. Чăваш чĕлхи кĕнеки те тасҫта кайса кĕнĕ, ун хушшинче сочинени çырнă хут пулмаллаччĕ. Анчах ку та тĕп инкек мар-ха. Шкулта манпа никам та калаçасшăн мар. Юлташсем те ман çине пăха-пăха пăшăл пăтти пĕçерееççĕ. Мĕн пулса иртнине вара Сережа тусăм каланинчен çеç пĕлтĕм. Пирĕнпе пĕрле вĕренекен Егор эпĕ юнашар класри Аленăна юратнине пурин патне те çитерме ĕлкĕрнĕ иккен. Эх, мĕн тери тарăхрăм. Эпĕ Егора шаннă-çке... Пĕтĕм шанчăк арканчĕ. Халĕ Аленăпа тек пĕрле пулаймăпăр ĕнтĕ.

Кунĕ ытла та тĕксĕм, хĕвел те йăл кулса пăхмарĕ. Пăсăлнă кăмăла лайăхлатма çук. Уроксем те аранах вĕçленчĕç. Эпĕ тумлантăм та киле утрăм. Урамра сивĕ, тăман вĕçтерет. Çак самантра никама та курас килмест.

Килте атте-анне çукчĕ. Лăпланас тесе телевизор умĕнче чей ĕçсе лартăм. Анчах пулăшмарĕ.

Каçхине аттепе анне таврăнчĕç, пĕр-пĕрнипе çаплах калаçмаççĕ. Чи кÿренмелли – сăлтавне пĕлместĕп!

Хама никама та кирлĕ мар пек туйса пÿлĕме кайрăм. Кăштах хăрушă та пулчĕ. Мĕншĕн пурăнни çинчен шухăшлама тытăнтăм. Мĕншĕн? Мĕне кирлĕ çакăн пек пурнăç? Сана хаклаmаççĕ, эсĕ никама та кирлĕ мар пулсан...

Хуравне тупаймарăм.

Эпĕ хама вăйлă тесе шухăшлаттăм. Анчах çак самантра куççуле чараймарăм. Çывăрма выртнă чухне ыранхи çинчен ĕмĕтлентĕм: аттепе анне мирлешчĕр, канмалли кунсенче каллех аттракциона çÿрĕпĕр, шкулта пĕтĕмпех лайăх пултăр, манран никам та ан култăр...

***Ноябрь уйăхĕн 27-мĕшĕ.***

Будильник сассипе вăрантăм. Эх, мĕнле тăрас килмест те... Ытла илемлĕ тĕлĕк куранчĕ, анчах вăл мĕнле вĕçленнине астумастăп. Ахăртнех, Аленăпа çын пурăнман утрав çине лекнине тĕлленнĕ эпĕ, тахçанах ĕмĕтленетĕп çакăн çинчен.

Пит-куçа çуса апатланма ларсан ĕнерхи япăх куна аса илтĕм те кăшт хурлантăм. Анчах кăмăл пурпĕрех аван-ха, мĕншĕн тесен аттепе анне мирлешнĕ пек туйăнчĕ. Шкула çитсен Егора ăс кĕртсе илес шухăш та манăçмарĕ-ха.

Палăртса хунă пекех пулса тухрĕ. Пĕрле вĕренекенĕме курсан ăна чышкăлама пуçларăм. Вăл каçару ыйтрĕ, пурне те хăй шÿтленине пĕлтерме сăмах пачĕ.

Телее, манран кулма пăрахрĕç. Кăмăлтуйăм йĕркеленчĕ. Уроксем вĕçленсен шкултан тухрăм çеç, ман умра Алена аслă класра вĕренекен арçын ачапа çавăтăнса пынине куртăм, тарăхса кайрăм. Киле чупсах çитрĕм. Ыран шкула каймăп терĕм. Аленăна çав арçын ачапа курасси ытла та йĕрĕнтерет-çке...

Çавăн чухне пурнăç мĕн тери хаяр иккенне ăнлантăм, пÿлĕмре питĕрĕнсе лартăм. Анне апатланма чĕнсен сăпайлăн хирĕçлерĕм, тарăхнипе çиес те килмерĕ.

Ыйхă тасҫта çĕтрĕ. Куçа хупсан Алена сăнне çеç куратăп...

***Ноябрь уйăхĕн 28-мĕшĕ.***

Мана атте алăкран шаккаса вăратрĕ. Хама япăх туйнине, шкула каяс мар тенине пĕлтертĕм. Пулăшмарĕ. Аттепе анне шкула хăваласа ячĕç. Пĕрремĕш урока аран чăтса иртертĕм те шкултан тартăм. Анчах киле кайма васкамарăм, юханшыв хĕрне чупрăм.

Сивĕ çил юра вĕçтеретчĕ. Эпĕ шăнса хытрăм. Кăнтăр вăхăчĕ иртнĕрен хырăм выçнине те туйрăм.

Акă ура сасси илтĕнчĕ. Ку манпа пĕрле вĕренекен Наташа. Хашка-хашка чупса çитрĕ вăл. Çынсем ялĕпех мана шыраса хăшкăлнă иккен. Наташа ÿкĕтленипе çеç кайма килĕшрĕм.

Шкула çитсен класс ертÿçи хăйĕн патне чĕнсе илчĕ, çапла хăтланнăшăн ятларĕ, ыран атте-аннепе килме каларĕ. Кун пăсăлчĕ.

Киле таврăнсан аттепе аннене хамăн япăх кăмăла кăтартас мар терĕм, вĕсем дневнике курасран та хăрарăм. Унсăрăн мана пула каллех çапăçса, тавлашса кайма пултарĕç-çке. Çавăнпа иртерех çывăрма выртрăм.

***Ноябрь уйăхĕн 29-мĕшĕ.***

Каçхине вĕрентекен шăнкăравласа аннене пĕтĕм историе йăлтах каласа панă иккен. Акă вăл манран шкултан мĕншĕн тарнине ыйтать. Эпĕ пĕр сăмах та каласшăн марччĕ, анчах анне ÿкĕтлерĕ, аттене каламасса шантарчĕ. Эпĕ чуна уçса парсан анне мана лăплантарма тăрăшрĕ, ахалех кулянмалла мар терĕ. Тинех лăпкăн шкула утрăм.

Çапла çĕнĕ кунăм пуçланчĕ. Шкулта пĕтĕмпех лайăх. Алена кампа пулни те мана питех хумхантармарĕ. Кам-ха вăл маншăн пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнма? Пурнăçа çĕнĕ страницăран пуçлама шут тытрăм. Çĕнĕ пурнăçăм чылай кăсăклăрах тата илемлĕрех пек туйăнчĕ.

Уроксем вĕçленчĕç. Хаваслă кăмăлпа киле васкарăм. Каçхине ман пата Наташа килчĕ. Апатланнă хыççăн урок тума лартăмăр. Килти ĕçе юлташсемпе пурнăçлама темиçе хут интереслĕрех иккен. Урамра тĕттĕмленсен Наташăна ăсатса ятăм та çывăрма выртрăм.

***Ноябрь уйăхĕн 30-мĕшĕ.***

Хĕвеллĕ те савăнăçлă кун. Çиес те килмест, чунра çуркунне çитнĕ тейĕн. Шкулта мана олимпиадăна хутшăнма сĕнсен хаваспах килĕшрĕм. Хама çĕнĕлле тĕрĕслесе пăхас килнĕрен спортпа туслашрăм. Ку çав тери йывăр мар иккен, мана килĕшрĕ.

Каçхине каллех Наташа килчĕ. Анчах ыран канмалли кун пулнăран манăн килти ĕçе пурнăçлас килмерĕ. Эпир компьютер вăййисене вылярăмăр. Çаплах кун та иртсе кайрĕ.

***Декабрь уйăхĕн 30-мĕшĕ.***

Наташăпа иксĕмĕрĕн туслăх вăйланчĕ. Манăн сăнÿкерчĕк Хисеп хăми çинче курăнма тытăнчĕ. Ыран Çĕнĕ çул кĕтмелле, çавăнпа эпир пĕтĕм класпа сценка лартма хатĕрлентĕмĕр.

Сценкăна лайăххах хатĕрлеме пулăшма Наташа каçхине ман пата килме шантарчĕ.

***Январь уйăхĕн 15-мĕшĕ.***

Алена урăх çĕре куçса кайнă. Анчах маншăн ку пĕлтерĕшлех мар. Эпир Наташăпа пĕр-пĕрне юрататпăр, пирĕн пĕтĕмпех лайăх.

***Дмитрий МЯСНИКОВ.***

Самар облаçĕ,
Шунтал районĕ,
Аксаку шкулĕ.

САВĂНĂÇ

# Чи телейли

Паян Марина ытти чухнехинчен иртерех вăранчĕ. Вырăн çинчен йăпăр-япăр сиксе тăчĕ те чÿрече каррисене сирсе урамалла тинкерчĕ. Унта лапка-лапка юр çăвать. Асамлă çанталăк. Марина сăнĕ йăл кулăпа çуталчĕ. Вăл тĕкĕр умне тăрса вăрăм çÿçне лайăх тураса якатрĕ те икĕ çивĕт турĕ. Вĕçĕсене кĕрен чечек евĕр тыткăчсемпе пуçтарчĕ. Паян унăн шкулта чи илемли пулас килет-çке!

– Ну, чиперук, çуралнă кун ячĕпе сана! – терĕ вăл тĕкĕртен хăйĕн çине пăхакан пикене.

Пит-куçне çуса тумланнă хыççăн тĕпеле утрĕ. Сĕтел çинче илемлĕ торт, вазăра чечек çыххи. Амăшĕ хăçан ĕлкĕрет-ши тулькăш? «Хăй ăçта-ши тата?» – ун-кун пăхкаласа шухăшларĕ Марина. Акă пÿрт алăкĕ уçăлчĕ те амăшĕ кĕрсе тăчĕ. Марина ăна чупса пырса ыталарĕ. Сивĕпе хĕрелнĕ пит çăмартийĕсенчен чуптуса тав турĕ те савăнăçлăн тĕпеле кĕрсе чей вĕретме лартрĕ.

– Хĕрĕм, чĕререн саламлатăп сана! Яланах çавăн пек ăслă та илемлĕ пул! – терĕ амăшĕ ачине çупăрласа. Вăл та тумтирне хывса тĕпеле иртрĕ. Чей ĕçме куркасем хатĕрлерĕ.

Тортпа чей ĕçнĕ хыççăн Марина хăпăл-хапăл тумланчĕ те шкулалла утрĕ. Питĕнче кулă çиçет.

Пĕрремĕш урок – истори. Петр Геннадьевич куçлăхĕ айĕн пăхса ачасем килти ĕçе мĕнле хатĕрленине тĕрĕслет. Маринăн хуравĕ ăна тивĕçтерчĕ пулас, «пиллĕк» паллă лартса пачĕ.

Тăхтавра Маринăпа тантăшĕ коридорти чÿрече умĕнче шăкăл-шăкăл калаçнă çĕртех вăл шыв сыпнă пек пулчĕ те тусĕ хыçнелле тинкерчĕ. Чĕри хыттăн тапма пуçланине юлташĕ сисмест-ши тесе Юля çине канăçсăррăн пăхса илчĕ. Юля калаçу тăруках татăлнипе тĕлĕннĕскер, Марина тинкерекен енне çаврăнчĕ. «Ăхă! Пĕтĕмпех ăнланмалла!» – вĕлтлетрĕ шухăш унăн пуçĕнче. Хĕрсенчен инçех те мар вуннăмĕш класра вĕренекен Дима расписани пăхса тăрать. Ах, миçе хĕр чĕрине çунтармасть-ши вăл? Юля Марина çине шелленĕ евĕр пăхса илчĕ те:

– Ун пирки ан та ĕмĕтлен, – терĕ çирĕппĕн. – Вăл сана асап çеç кÿрĕ...

Анчах Марина ăна итлесшĕн пулмарĕ. Дима ăна тахçанах килĕшет-çке! Мĕнле ĕмĕтленес мар ун пирки! Вăл юмахри принц тейĕн! Ăслă, илемлĕ, хаваслă... Марина сисмесĕрех шухăша путрĕ. Акă вĕсем Димăпа алла-аллăн тытăнса утаççĕ пек, вăл питĕ телейлĕ пек...

– Салам, Марина! Салам, Юля! – янăрарĕ çывăххах каччă сасси. Марина ыйхăран вăраннă пек пулса шартах сикрĕ. Ун умĕнче Дима тăрать! Ку тĕлĕк мар пуль те?

– Марина, çуралнă кун ячĕпе саламлатăп сана! Телей, юрату, ăнăçу сунатăп! – терĕ те Дима пикене открытка тыттарчĕ. Марина пичĕ помидор пекех хĕрелчĕ, вăл Юльăна аллинчен сĕтĕрчĕ те каччăна тав тумасăрах класа вирхĕнчĕ.

Парта хушшине вырнаçса илемлĕ открыткăна уçрĕ те хитре почеркпа çырнă сăмахсене пăлханса вуларĕ. «Чун-чĕререн саламлатăп сана, Марина! Тĕнчере мĕн лайăххи пур, çавна çеç сунатăп! Паян хĕвел те сан валли çеç ялкăшать, юр та саншăн çăвать, кайăксем те ав юрлаççĕ!» – тенĕ унта. Питĕ илемлĕ салам. Анчах та кĕтменлĕхсем çакăнпа çеç вĕçленмерĕç-ха. Открытка хĕрринче: «Эсĕ мана килĕшетĕн», – тесе çырнă Дима вĕтĕ саспаллисемпе. Тата аяларах: «Паян каçхине, клуб умĕнче, сакăр сехетре тĕлпулма хирĕçлемĕн-ши?» – хушса хунă.

Акă вăл, ĕмĕт! Марина телейлĕ куçĕсемпе çиççе парнене Юльăна кăтартрĕ, лешĕ те тĕлĕнсе кайрĕ. Юлташне çапах та Димăпа асăрханулăрах пулма каларĕ. Пĕлсе пĕтер-ха вĕсене, каччăсене!

Каçхине чăнах та тĕлпулчĕç вĕсем. Пур ташша тенĕ пекех пĕрле ташларĕç. Дима Марина çине ытараймасăр пăхни Юльăн чĕрине те çемçетрĕ. Тусне сăнакансккер хăй те йăл кулса ячĕ те Димăн тусĕпе илемлĕ кĕвĕпе çаврăнчĕ.

***НИНУК.***

**(Малалли. Пуçламăшĕ 2014 çулхи 50, 51, 52-мĕш, 2015 çулхи 1, 2, 3-мĕш номерсенче).**

*Куçма ТУРХАН*

# Çÿллĕ иккен Хусан хÿмисем



— Апла пулсан юлашки сăмаха воинсем калаччăр. Хусан шăпине вĕсен паттăрлăхĕ татса патăр! – терĕ аслă князь воеводăсене.

Хусан патĕнче çапăçу умĕнхи йывăр ĕç пуçланчĕ: ратниксем çерempe хăйăр çийĕн пылчăклă çулпа тупă-етре сĕтĕрчĕç, малтанах хатĕрленĕ йывăç башньăсемпе тарасасене турттарчĕç, çар пуçĕсем каласа хунă пекех, тын валли пĕрер пĕрене касрĕç, вунă воин пуçне пĕрер тур пураса лартрĕç.

Вырăс станĕ çак вăхăтра кĕшĕлтетсе, вĕресе тăракан кăткă йăвине аса илтерчĕ.

Куç умĕнче, сăртра, Хусан курăнса ларчĕ. Çип-çинçе те тем çÿллĕш минаретсем, кремльти шĕвĕр вĕçлĕ башньăсем, айккинчи тĕссĕр хуралтăсем пĕтĕмпех вăрçă валли тунă çуртсем пек туйăнса тăчĕç.

Шавлă ĕçкĕ халăха ытларах та ытларах пуçтарса пĕчĕккĕн хĕрсе пынă евĕр, çапăçу майĕпен амаланса, вăйланса пычĕ. Тупăсем вырнаçтарнă башньăсемпе воинсем хÿтĕленсе тăмалли турсем, темиçе утăмшарăн пулин те, хула стенисем патнеллех шурĕç. Булак енчен ĕнтĕ вĕсем чул хÿме айнех пырса чарăннă.

Анчах тутарсем вырăссене нимпе те хÿме çывăхне ярасшăн мар: хуларан пĕчĕк ушкăнсем тухсах тăраççĕ. Кашни ушкăн башньăсемпе турсем таврашĕнчи ратниксене хăвăрт тапăнать те пăртак çапăçнă хыççăн каялла кĕрсе каять. Унтан крепоçрен тепĕр ушкăн сиксе тухать. Анчах кун пек майпа вырăссене хăваласа яма май çук. Вĕсен йышĕ хăвăрттăн ÿссе пырать. Ĕнтĕ пушкарьсемпе ытти ратниксене пулăшма стрелецсен отрячĕсем çитрĕç. Тутарсем те йышлăнраххăн тухма, малтанхинчен вăрахрах çапăçма пуçларĕç.

Акă пĕрремĕш турсенчен аякра та мар утлă çар речĕсем пĕр-пĕрин çине çиçĕм пек хăвăрт пырса тапăнчĕç. Лашасем, месерле кайса ÿкес пек, чĕвен тăчĕç. Вăрăм сăнăсем шатăртатса хуçăлчĕç, кольчугăсене тата ытти тимĕр япаласене пырса перĕнсе хĕçсем чанклатрĕç. Пĕр воинĕ хĕçне ытла тарăхса сулса ячĕ курăнать, хĕç алăран вĕçерĕнчĕ те аякка ыткăнса кайрĕ, такам лаша хырăмне ухă йĕппи пек пырса тăрăнчĕ. Ут хартлатса илчĕ, малалла тапса сикрĕ, воинсен ушкăнне пырса тухса темиçе çынна хăй айне турĕ.

Çапăçăва кĕнĕ юлан утсенчен каялла тухакансем сахал пулчĕç. Ăнсăртран çеç чĕррĕн юлнă пĕр-икĕ воин, ухмаха ернĕ этемсем пек, хапха умĕнче тĕлли-паллисĕр çаврăнкаласа çÿрерĕç.

Унтан крепость хÿми патне ăшне çĕр тултарнă тарасăсем хыçне пытанса стрелецсемпе пищальниксен пысăкрах ушкăнĕсем çывхарчĕç. Çавăн пек ушкăнсенчен пĕрне Иван Черемисинов стрелецки голова ертсе пычĕ.

– Тăвансем! Нимрен ытла тăшман утлă çарĕнчен сыхланăр. Пирĕншĕн чи хăрушши халь – утлă çар, – асăрхаттарчĕ вăл хăйĕн ратникĕсене.

Хĕрсе кайнă воинсем ăнакăна пăхса тăмарĕç, хÿме çинче курăнакан тутарсене ухăпа персе малаллах чупрĕç. Çывăхрах хÿмене вырăссем хыçалтан кăларса янă чул етре пырса çапăнчĕ. Вăл чăл-пар саланчĕ те куç умĕнчех темиçе çынна вĕлерсе тăкрĕ. Черемисинов каялла çаврăнчĕ, такама чышкăпа юнарĕ, хыçалта инçе те мар вырăс юлан учĕсем сиккипе килнине асăрхасан шăлне çыртса хăйĕн воинĕсем хыççăн чупрĕ.

Етресем часрах та часрах çурăлма тапратрĕç. Вĕсенчен хăш-пĕрисем таçта аякка, крепость леш еннех кая-кая ÿкрĕç.

Тупăсем пенĕ хушăра Воротынскипе Мстиславский воеводăсем ертсе пыракан икĕ полк пĕр харăс хÿмесем çине тапăнса кĕчĕç. Вĕсене курса хÿмесене ватма парас мар тесе тăвата хапхаран Хусан воинĕсем юлан утпа та, çуран та капланса тухрĕç.

Уйрăм тытăçусем пĕтрĕç ĕнтĕ, хула тулашĕнче пур çĕрте те хăрушă çапăçу пуçланчĕ. Кунта икĕ енĕ те пĕр-пĕрне хĕрхенмерĕç. Çынсем ахлатрĕç, ÿкрĕç, юлашки вăйĕсене пуçтарса татах сике-сике тăчĕç, татах ÿкрĕç.

Тутарсем хапхасенчен тухнă хыççăн крепость хÿмисенчен ытла аякка каймарĕç, анчах çапăçасса акăш-макăш хаяррăн çапăçрĕç. Вĕсен утлă çарĕ пĕр вырăнтан тепĕр вырăна çил пек ыткăнса çÿрерĕ, вырăс стрелецĕсене юлан утсенчен хÿтĕленме çав тери кансĕр пулчĕ.

Çынсем йышлăн вилчĕç. Башньăсемпе турсем çитмерĕç, вĕсенчен чылайăшне тутарсем ним юлми аркатса тăкрĕç.

Çуран çар нумай пĕтнине кура воеводăсем крепость çывăхне утлă çарăн çĕнĕ отрячĕсене илсе пычĕç, кĕрешÿ тата ытларах хĕрсе кайрĕ. Çапах та кĕске тытăçу хыççăн вырăссем тутар отрячĕсене каялла хăваласа кĕртрĕç.

Хусан çийĕнче вăйлă пушар чухнехи пек тĕтĕм капланса тăчĕ, вырăнĕ-вырăнĕпе хĕрлĕ хура çулăм явăнчĕ.

Хула хÿмисем çинчен вырăссем еннелле пищальсенчен печĕç, сăнăсем ывăтрĕç, чул муклашкисем вăркăнтарчĕç, çывăха пынисене вĕри сăмалапа сапрĕç. Тутарсем çине те вĕçĕмсĕр вут тăкăнчĕ, вĕçĕмсĕр чулпа тимĕр сапăнчĕ.

Çынсем вăхăт шутне манса кайрĕç. Вĕсене çак самантра хырăм выççи те, хăйсем ывăннипе ывăнманни те, çак этем тÿсмелле мар хĕрÿ çапăçăвăн вĕçĕ пулассипе пулмасси те кăсăклантармарĕ. Вырăссем те, тутарсем те çак вăхăтра пĕр япала çинчен çеç шутларĕç: умра тăшман, çавна тĕп тумасăр вĕсемшĕн пурнăç çук. Тĕрĕссипе, вĕсем ун çинчен шутламарĕç те темелле, ăна чунпа çеç туйса тăчĕç.

Тĕттĕм пулчĕ. Халтан кайнă, суранланса пĕтнĕ воинсем çын виллисем урлă каçа-каçа хăйсем ирхине тăнă вырăнĕсене таврăнчĕç. Çĕнтерекенĕ пулмарĕ.

Канма вăхăт сахал юлчĕ. Пĕтĕм чунпа çуйкăнланса çитнĕ воинсем ниепле те лăпланса çывăрса кайма пултараймарĕç. Çитменнине тата, хуралçăсем çĕрĕпе: «Вăранăр! Утлă çар тапăнса килет! Утлă çар килет!» – тесе кăшкăрса хăратрĕç. Чăнах та, таçта сăртра вучах çутисем курăнчĕç унта та кунта тутарла çухăрашни илтĕнсе тăчĕ. Ирхине çакна пĕлчĕç: вырăссен станĕ йĕри-тавра тутарсен утлă çарĕ çÿрет иккен. Темиçе çĕрте вăл вырăссене хăвăрттăн пырса тапăнса сиен тума та ĕлкĕрнĕ.

Ытти кунсем вара малтанхи кун пекех хĕрÿ пулчĕç, анчах вăрçăри çĕнтерÿ тĕлĕшĕнчен нихăш енне те нимĕн те памарĕç. Вырăссем ирсерен хÿме патне башньăсемпе турсем илсе пыма тăрăшрĕç, тутарсем кашнинчех вĕсене çывăха ярас мар тесе пĕтĕм вăя хучĕç. Каярахпа, малтанхи пекех, мĕн çĕрлеччен хаяр çапăçу пычĕ.

Хулана хупăрласа тăма тытăннăранпа виçĕ кун иртсен, çанталăк сасартăк сивĕтсе пăрахрĕ. Унтан вăйлă çил тухрĕ: таврара пур çĕрте те тăвăл алхасма тапратрĕ. Атăл çинче кимĕсем путрĕç, вăрманта тем пысăкăш йывăççем хирĕне-хирĕне ÿкрĕç, сывлăшра тăвăл çĕклесе илнĕ япаласем хăрушшăн явăнса çÿрерĕç. Государь валли çыранран кăшт аяккарах лартнă пысăк чатăр чылайччен Атăл çинчи çилкĕç пек вылянкаласа тăчĕ. Часах ун каштисем шăтăр-шăтăр турĕç, чатăр паласĕсене çил вĕçтерсе кайрĕ, Иван Васильевич, çак кунсенче ахаль те турăшсен умĕнчен пăрăнманскер, вĕçĕмсĕр турра пуç çапрĕ. Дьяксем айккинче тĕлĕнсе пăхса тăчĕç: пĕтет-и ку ирхи кĕлĕ, пĕтмест-и? Пĕри шăппăн: «Тупата, ухмаха ерет пулмалла пирĕн государь», – тесе те каласа хучĕ.

Патша çак вăхăтра хăй хăраса ÿкнине пытарма та пултараймарĕ. Сăнран кăвакарса кайнă вăл, алчăранă пысăк куçĕсем тискеррĕн пăхаççĕ. Тепĕр чухне государь ухмаха ернĕ пек хăй тĕллĕн калаçать. Паçăр дьяксем унăн уйрăм сăмахĕсене те уйăрса илчĕç.

– Саулпа Валаам пек пулас марччĕ, тем тесен те манăн Саулпа Валаам пек пулас марччĕ, – мăкăртатрĕ Иван Васильевич.

Çав кун патша апат çинĕ чух та ятне çеç турĕ, çынсемпе сахал калаçрĕ, каç кÿлĕм çеç Андрей Михайлович Курбский княçпа чылайччен тавлашса ларчĕ.

Курбский воевода, государь пекех, çав тери хăраса ÿкнĕ иккен, вăл хăйĕн вĕчĕрхеннĕ чунне аслă княçа ăс панипе лăплантарасшăн курăнать.

– Тем тесен те эпир Едигера çар ĕçне ун пекех пĕлет тесе шутламан, аслă князь, – хăйĕншĕн те, ыттисемшĕн те куляннă пек калаçрĕ князь. – Пирĕн патăрта пурăнса, пирĕнпе пĕрле походсене çÿресе Астрахань патшин ывăлĕ вăрçă ăсталăхне начар мар вĕренме ĕлкĕрнĕ. Хуларан мĕнле тухса тапăнаççĕ пире! Ниçта кайса кĕме çук вĕт. Крепость тулашĕнче мĕн чухлĕ çар тата унăн! Ку çара çĕнтерме кансĕр пулать. Пирĕн утлă çар сахалрах. Поход пуçлама каярах юлтăмăр. Çанталăк юсанассине кĕтмелли çук, аслă князь, вăл кунсерен пăсăлма çеç пултарать...

– Каласа пĕтер, каласа пĕтер, – терĕ патша ăна тăрăшса итленĕ пек пулса.

– Ман каламалли нимех те çук, аслă князь. Лару-тăру йывăрланса пырать, çавă çеç манăн чуна шиклентерет пăртак.

– Суятăн, каламалли пур санăн, княже! Анчах эсĕ вăл сăмаха тÿрех персе яма хăратăн. Эсĕ мана кунтан хăвăртрах тарма хушатăн, çапла-и, Андрей Михайлович?

– Тарма тени – хитре мар сăмах. Çапах та çара çăлса хăварасси çинчен шутласа пăхмалла пирĕн. Поход хăйĕн ĕçне турĕ, эпир Хусана нихçанхинчен вăйлă хăратрăмăр. Едигер сан сăмахунтан питех иртес çук, аслă князь, иртес пулсан тепре те килсе сехĕрлентерме пулать.

– Христос пирĕн майлă, княже, чакма ун пекех васкас мар, – терĕ Иван Васильевич хăйĕн çиллине аран-аран тытса чарса. – Турă телей парсан тăвăл иртсе те каять ак. Лайăх çанталăкра хулана вăйлăн тапăнма пуçлатпăр.

– Хусана илейместпĕр, аслă князь, кун пирки халех татса калама пулать, – вĕрентсе калаçма пăрахмарĕ Сылтăм енчи полк воеводи. – Мана ĕненмесен ытти воеводăсенчен ыйт эппин, вĕсем те сана çавнах калĕç: пирĕн вăй чакать, тутарсен хутшăнса пырать. Вĕсем патне часах астраханецсем çитмелле!

– Такам килсен те, астраханецсем çитсен те чакма май çук халь. Куратăн, мĕнле пысăк çар пуçтартăмăр кăçал, княже. Çав çара хулана хупăрланăхупăрламан каялла илсе каяс-и манăн?

**(Малалли пулать).**

# Хаваслă 2015 самант

## Сăмахкаçмăшсем



**Сылтăмалла:** 1. Кил ăшши. 4. Казаксен пуçлăхĕ. 9. Пÿрт пайĕ. 11. Нухрат. 12. Чăваш апачĕ. 15. Литература жанрĕ. 18. Пичке, лутка, ... 19. Хурт-кăпшанкă. 20. Чăваш çыравçи. 21. Урай «хăми». 24. Кăнтăрти йывăç. 26. Вĕшле йытă. 27. Тискер пулă. 31. Р.Сарпин хайлавĕ. 33. Çÿç «кĕрепли». 34. Кÿлĕри «апат». 35. Икĕ вĕçлĕскер. 36. Пистолет.

**Аялалла:** 2. Йывăç. 3. Урана тăхăнмалли. 5. Сĕт-çу. 6. Хăлха çакки. 7. Африкăри пушхир. 8. Вĕçенкайăк. 10. Çурт кăшкарĕ. 13. Мухтанчăк. 14. Телекурав ертÿçи. 16. Пушă. 17. Тĕвесен ушкăнĕ. 22. Пулас генерал. 23. Хветĕр Уяр романĕ. 25. Ÿсен-тăран. 28. Тĕс. 29. Утă купи. 30. Кĕрпе. 32. Поселокран пысăкрах.



**Сылтăмалла:** 7. Бразилири стадион. 8. Чăваш сăвăçи. 9. Апат-çимĕç. 10. Уçăлмалли вырăн. 12. Самолет пусми. 13. Тÿлев нуши. 15. Тумтир. 17. Машина пайĕ. 18. Çумалли хатĕр. 21. Ватă çын. 22. Утмаçул. 23. Ишмелли меслет. 25. Çурçĕрти «пăрахут». 26. Тупайман «çын». 27. Вырăс çыравçи. 29. Президент пулнăскер. 30. Нарспи мăшăрĕ.

**Аялалла:** 1. Ырăлăх палли. 2. Пулă. 3. Ацетон «тăванĕ». 4. Кисĕп. 5. Вĕтетнĕ какай. 6. Афганистанри хула. 11. Мухтанчăк. 12. Р.Сарпин кĕнеки. 14. Хăйрамалли хатĕр. 16. Штангист, Олимп чемпионĕ. 17. Вĕренÿ пÿлĕмĕ. 19. Кĕвĕ терминĕ. 20. Вăрманти «салтак». 23. Вырăс юрăçи. 24. Чура «пăявĕ». 27. Чечек. 28. Пĕчĕк вăрман.

## Пуçватмăш




Палăртнă сас паллирен пуçласа ыттисене тĕрĕс çыхăнтарма тăрăшăр. Ун чухне республикăри пĕр вырăна çитсе курма пултаратăр.

**Пăхсан чăн та решетке,**
**Йăнăш çапнă-мĕн иккен...**

**Тÿрлетсен пулать йĕрке,**
**Цифра хăй тĕлне лексен.**




Эппин, картара пытанса ларнă ваттисен сăмахне шыраса тупма васкăр!

## Çăлтăрсем çунсассăн йăлтăр, Сăмахсем тухаççĕ чăлтăр...

Апла тăк çав тăватă сăмаха пĕр-пĕринпе çыхăнтарма пулăшăр-ха.




*Николай* ***КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) **хатĕрленĕ.**